ПЕТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛĔШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

ВКП(б) Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1952 çул Май 7 юнкун № 91 (8743) Хакĕ 20 пус. 35-мĕш çул тухать.

СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заема пурте пĕр кăмăллă пулса çырăнса илнипе совет халăхĕ хамăрăн социализмлă Тăван çĕршыва, коммунистсен партине, Совет правительствине, аслă çулпуçăмăрпа учителĕмĕре И. В. Сталин юлташа чунтан-чĕререн юратнине тата тепĕр хут кăтартса парĕ.

Радио кунĕ

Паян совет халăхĕ Радио кунне паллă тăвать.

Халăхăн культурăллă тата политикăллă пурнăçĕнче радио питех те пысăк вырăн йышăнса тăнине шута илсе, хамăрăн Тăван çĕршыври наукăпа техника радио енĕпе тунă çитĕнӳсене халăх хушшине ытларах сарас, халăхăн йышлă массисем хушшинче радио юратакансен йышне ӳстерес шутпа, 1945 çулта Совет правительстви, вырăссен паллă ученăй-патриочĕ А. С. Попов радио шутласа кăларнăранпа 50 çул çитнине палăртса, майăн 7-мĕшĕнче çулсеренех Радио кунне уявлама йышăнчĕ.

Радио тĕлĕшпе ĕçлекен совет ученăйĕсем А. С. Попов пуçласа янă ĕçе чыслăн малалла илсе пыраççĕ. Партипе правительство пирĕн ученăйсене Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн ăнăçлă ĕçлеме мĕн кирлине пĕтĕмпех туса пачĕç. Совет ученăйĕсем радиотехникăна ăнăçлă аталантарса, ăна çĕнĕ открытисемпе пуянлатса пыраççĕ. Вĕсем радиотехника тата радиофикаци енĕпе тунă нумай ĕçсем ют çĕршывсенчи наукăпа техника çитĕнĕвĕсенчен чылай малта тăраççĕ. Çакна ăна радио енĕпе ĕçлекен ученăйсен, инженерсен тата специалистсен пысăк ушкăнне Сталинла премисем пани те уççăн кăтартать.

Пирĕн çĕршывра радиотехникăпа радиовещани çав тери вăйлă аталанни В. И. Ленинпа И. В. Сталин ячĕсемпе тачă çыхăнса тăрать. Пирĕн аслă çулпуççем радио калама çук пысăк вырăн йышăнассине малтанах курса тăнă. Çыхăну ĕçĕн хăватлă хатĕрĕ пулнипе пĕрлех, агитаципе пропаганда ĕçĕн хăватлă хĕçпăшалĕ пулса тăракан радиопа В. И. Ленин тата И. В. Сталин Октябрьти Социализмлă Аслă революцин малтанхи кунĕсенчех усă курнă.

Совет Союзĕнче радиопа миллионшар çынсем усă кураççĕ. «Мускавра калакан сăмахсене, докладсене тата лекцисене пĕтĕм Россия итлеме тытăнĕ», тесе аслă Ленин каланă сăмахсем пурнăçа кĕчĕç.

Пирĕн çĕршывра радио ырă тĕллевсене пурнăçлама—коммунизм тума, ĕççыннисен пĕлӳлĕхне ӳстерме, совет патриотизмне вăйлатма, халăхсен туслăхне çирĕплетме пулăшать. Пирĕн çĕршывра радио политикăллă информаци сармалли, марксизм-ленинизм идейисене сармалли, производствăра малта пыракансен опычĕпе, социализмла культура, наука тата искусство çитĕнĕвĕсемпе пĕтĕм халăха паллаштармалли хатĕр пулса тăрать. Радио совет музыкипе классикла музыкăн, литературăпа драматургин çитĕнĕвĕсене йышлă массăсем хушшине сарма пулăшать.

Пирĕн радио пĕтĕм тĕнчери халăхсене миршĕн кĕрешме ырми-канми чĕнет, вăрçă вучĕ чĕртекенсене тăрă шыв çине кăларса пырать.

Мускавран пулакан радиопередачăсене урăх çĕршывсенчи нумай халăхсен чĕлхипе параççĕ. Мускавăн хăватлă сассине урăх çĕршывсенчи миллионшар çынсем итлеççĕ, империализма хирĕç, миршĕн, ирĕклĕхшĕн тата демократишĕн кĕрешме вăй илсе тăраççĕ.

Центральнăй радиовещанипе пĕрлех вырăнти радиовещани те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл союзлă тата автономиллĕ республикăсенче, крайсенче, облаçсенче, пысăк хуласемпе районсен центрĕсенче кашни кун пулать, халăха идейăллă воспитани пама пулăшать, вырăнти пурнăçа пур енчен те çутатса пырать.

Совет çыннисем кашни республикăра хăйсен тăван чĕлхипе пулакан передачăсене итлеççĕ. Çапла, сăмахран, Чăваш радиостанцийĕ тăрăх талăкра икĕ сехет хушши тĕрлĕ передачăсем пулаççĕ. Пирĕн ĕççыннисем республикăри «Коммунизм ялавĕ», «Советская Чувашия» тата «Молодой большевик» хаçатсенче çырнисене вăхăтра пĕлме пултараççĕ. Радиостанци тăрăх кунне икĕ хутчен çĕнĕ хыпарсем пĕлтереççĕ. ВКП(б) историне вĕренекенсене пулăшма лекцисем, политшкулсенче вĕренекенсене пулăшма калаçусем ирттереççĕ. Промышленноçпа ялхуçалăх работникĕсем, çамрăксемпе ачасем валли ятарласа йĕркелекен передачăсем, наука ыйтăвĕсем тăрăх калаçусем пулаççĕ. Радио тăрăх тĕнчери лару-тăру çинчен час-часах статьясем вуласа параççĕ.

Анчах, калас пулать, Чăваш радиоинформаци комитечĕн ĕçĕнче çитменлĕхсем те чылай-ха. Вырăнти радиовещани идейăпа политика тĕлĕшĕнчен тивĕçлĕ вырăнта тăмасть. Ĕççыннисене коммунизмлă воспитани парасси çинчен, халăхсен туслăхĕ, совет патриотизмĕ çинчен калакан передачăсем сахал пулаççĕ, тăванла союзлă республикăсен пурнăçне çителĕксĕр кăтартаççĕ, Совет Союзĕн тулашри политикипе тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсене çителĕксĕр çутатса пыраççĕ. Республика умĕнче тăракан хуçалăхлă тата политикăллă задачăсемпе тачă çыхăнтарман передачăсем те пулкалаççĕ. Радиопередачăсенче социализмлă промышленность ыйтăвĕсене, ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн, продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн, унăн хăйне ларакан хакне йӳнетессишĕн пыракан кĕрешӳве çителĕксĕр çутатса пыраççĕ, промышленноçпа ялхуçалăхĕнче малта пыракансен паха опычĕпе ĕç меслечĕсем çинчен сахал каласа параççĕ. Колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен çирĕплетесси çинчен, малта пыракан колхозсен, МТС-сен тата совхозсен çитĕнĕвĕсем çинчен калакан передачăсем сахал пулаççĕ.

Музыка тата литературăпа драма вещанийĕнче идейăпа художество енчен вăйсăр произведенисем пани те пулкалать.

Чăваш радиоинформаци комитечĕн авторсемпе, корреспондентсемпе ĕçлессине тĕпренех лайăхлатмалла, радио итлекенсен конференцийĕсене час-часах ирттермелле, радио итлекенсен паха сĕнĕвĕсене пурнăçласа пымалла.

Вырăнти радиовещани ĕçне пур майсемпе те лайăхлатасси, унăн идейăллă-политикăллă шайне хăпартасси кулленхи задача пулса тăрать. Ĕççыннисене коммунизмлă воспитани парас ĕçре радиопа анлăрах усă курмалла. Радиопередачăсенче Совет Союзĕнчи халăхсен пурнăçне, Тăван çĕршывăн тулашри политикипе тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсене, коммунизм строительствин задачисене пур енчен те тĕплĕн çутатса, марксизм-ленинизм идейисене анлăрах сарса пымалла.

Промышленноçпа ялхуçалăхне аталантармалли государство планĕсене пĕтĕмĕшпех тата ирттерсе тултарассишĕн пыракан социализмлă ăмăртăва кулленкун çутатса пымалла, çутçанталăка улăштарса çĕнетмелли сталинла плана пурнăçлас, коммунизмăн аслă стройкисене тăвас ĕç мĕнле пыни çинчен тăтăшах каласа памалла.

Музыкăпа литература передачисене татăклăн лайăхлатмалла, радиопередачăсен репертуарне сармалла. Музыка радиовещанийĕнче совет композиторĕсен, музыка классикĕсен чи лайăх произведенийĕсене, Совет Союзĕнчи халăхсен творчествине, чăваш халăхĕн музыка культурин çитĕнĕвĕсене анлă кăтартасси тĕп вырăн йышăнмалла. Ĕççыннисене коммунизмлă воспитани пама пулăшакан илемлĕ литература произведенийĕсене сарас ĕçре радиопа анлăрах усă курмалла.

Республикăна радиофикацилес ĕçре те пысăк задачăсем тăраççĕ. СССР правительстви йышăннă тăрăх, 1955 çулта пирĕн республикăна талкăшпех радиофикацилесе çитермелле. Анчах 1951 çулта радиофикаци планне 63 процент çеç тултарнă. Кӳ тĕлĕшпе Калинино, Тăвай, Шупашкар, Муркаш, Советски, Шăхасан, Ишлей, Элĕк районĕсемпе ытти хăшпĕр районсенче нимĕн те туманпа пĕрех. Асăннă районсенче радиофикаци планне тултарас тĕлĕшпе кăçал та çавăн пекех начар ĕçлеççĕ.

Республикăна талкăшпех радиофикацилемелли план тăрăх 1950 çултан пуçласа 1955 çул вĕçленнĕ тĕле республикăра çĕнĕрен 70.000 пин радиоточка хутшăнмалла. Çак плана ăнăçлăн пурнăçа кĕртесси çитес виç-тăватă çул хушшинче ку тĕлĕшпе уйрăмах вăйлăн ĕçленинчен килет.

Республикăна радиофикацилемелли плана тултарасси çыхăну работникĕсен тивĕçĕ пулса тăрать. Çак ĕçре çыхăну организацийĕсене Досааф радиоклубĕсемпе радиокружокĕсен членĕсем пысăк пулăшу пама пултараççĕ, пулăшма тивĕçлĕ те.

Комсомол организацийĕсем ялсенче радио сарас ĕçе пуçарса пыракансем пулса тăмалла.

Районсенчи партипе совет организацийĕсен радиофикаци планне пурнăçа кĕртессишĕн куллен кĕрешес ĕçе организацилесе пымалла. Парти райкомĕсен тата пуçламăш парторганизацисен радиофикаци ĕçне ертсе пырассине татăклăнах вăйлатмалла.

Пичет работникĕсен кунĕ

Майăн 5-мĕшĕнче Союзсен Çурчĕн Колоннăллă залĕнче Пĕтĕм Мускаври пичет работникĕсен пухăвĕ пулнă, ăна большевикла пичет кунне уявланă ятпа ирттернĕ.

Большевикла пичет кунĕ çинчен «Правда» хаçатăн главнăй редакторĕ Л. Ф. Ильичев юлташ доклад тунă.

Пухури çынсем пысăк хавасланăхпа И. В. Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăннă.

* * *

Большевикла пичет кунĕ ячĕпе Ленинградра, Киевра, Фрунзе хулинче, Вильнюсра тата çĕршыври ытти хуласенче те пухусем пулнă. (ТАСС).

Пурте пĕр çын пек пулса заем çырăнса илер, халăх хуçалăхне малалла аталантарма, коммунизмăн Сталинла аслă стройкисене тума пулăшар!

Правительство СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заем (1952 çулхи кăларăм) кăлармалла тунине Шупашкарти Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективĕ пысăк хастарлăхпа кĕтсе илчĕ. Заводра ĕçлекенсем пурте заем çырăнса илеççĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: заводăн С-4 цехĕнче ĕçлекенсем заем илме çырăнаççĕ. Алă пусаканĕ—Л. Монахова юлташ. Вăл пилĕк эрнери ĕç укçи чухлĕ çырăннă.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Аслă стройкăсем валли

КУСЛАВККА, (Телефонпа). Правительство çĕнĕ заем кăларни çинчен пĕлтернĕ хыпар район тăрăх хăвăрт сарăлчĕ. Çав ятпа предприятисемпе учрежденисенче тата колхозсенче митингсемпе пухусем пулса иртеççĕ. Ĕççыннисем пурте заема пысăк хастарлăхпа çырăнса илеççĕ.

Суртсем тăвакан заводри рабочисемпе служащисем цехсенче митинга пухăнчĕç. Заводри паллă стахановка К. Белова юлташ çапла каларĕ:

— Эпир, совет çыннисем, партипе правительство, аслă Сталин пирĕншĕн куллен тăрăшнине лайăх туйса тăратпăр. Ĕççыннисем государствăна кивçен паракан укçа-тенкĕ халăх пурнăçне лайăхлатма, коммунизмăн аслă стройкисене тума каять. Эпĕ çĕнĕ заема пилĕк эрнери ĕç укçи чухлĕ çырăнатăп тата стахановла вахтăна тăрса сменăри нормăна 150 процент тултарма сăмах паратăп.

Трибуна умĕнче Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ, заводри паллă станочница М. Филиппова юлташ. Вăл хăйĕн юлташĕсемпе Май уявĕ умĕнхи ăмăртура нормăна кашни кун 150—200 процент тултарнă, уйăхри заданирен ирттерсе 1.000 тенкĕлĕх продукци тунă.

М. Филиппова уйăхри ĕç укçинчен чылай ытларах заем çырăнчĕ. Юлташсене те пĕр уйăх çурă ĕç укçинчен кая мар çырăнса илме чĕнчĕ.

Митинг хыççăн рабочисем сĕтел умне пырса подписка хучĕ çине алă пусма тытăнчĕç.

Т. ИВАНОВ.

Пурте пĕр шухăш-кăмăлпа

Шупашкарти Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводăн механически цехне рабочисемпе работницăсем, служащисем, инженерсемпе техниксем пухăнчĕç. Пурте вĕсем савăнăçлă, хаваслă. Кашниех правительство çĕнĕ заем кăларни çинчен пĕлтернине радиопа итлени çинчен каласа пама тăрăшать.

— Чĕререн ырламалли кĕтнĕ хыпар,— тесçĕ рабочисем пĕр шухăшлă пулса. Часах çак ятпа митинг пуçланать.

Митингра чи малтанах цех начальникĕ П. Княжевский юлташ сăмах илет.

— Правительство çĕнĕ заем кăларма йышăннине эпир чĕререн ырлатпăр, — тет вăл.— Эпир государствăна кивçен панă укçа пĕтĕмпех Тăван çĕршывăн экономикине вăйлатма, ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатма каять. Çĕнĕ заема çырăнса илни коммунизмăн аслă стройкисене хăвăртрах туса пĕтерме, çĕршывра çĕнĕ фабрикăсемпе заводсене, чугун çулсемпе шахтăсене ĕçе кĕртме май парĕ.

Заем укçи çĕнĕ шкулсем, больницăсем, санаторисемпе курортсем, канмалли çуртсем усма кайĕ. Пирĕн çĕршыври ĕççыннисен пурнăçĕ татах та лайăхланĕ, чечекленĕ. Эпир çавăншăн ĕçлетпĕр, çавăншăн кĕрешетпĕр. Çĕнĕ заема эпĕ пилĕк эрнери ĕç укçи чухлĕ çырăнса илетĕп.

— Правительство çĕнĕ заем кăларма йышăнни кашни ĕççыннине савăнтарать, лайăхрах ĕçлеме хавхалантарать,— тет Оленев слесарь.— Эпĕ кулленхи заданине яланах ирттерсе тултаратăп, Тăван çĕршыва планран ирттерсе продукци туса паратăп. Стахановла ĕç пире пысăк ĕç укçи илме май парать. Эпир, мирлĕ ĕçпе пурăнакан çынсем, миршĕн тăратпăр, миршĕн кĕрешетпĕр. Çав вăхăтрах эпир хамăрăн Тăван çĕршывăн оборона вăй-хăватне ӳстерессишĕн те манмастпăр. Çавăнпа эпир çĕнĕ заема пурте пĕр шухăш-кăмăллă пулса çырăнса илетпĕр. Эпĕ 950 тенкĕлĕх заем çырăнатăп, ку вăл манăн пилĕк эрнери ĕç укçи чухлĕ пулать.

Рабочисем пĕрин хыççăн тепри тухса калаççĕ, сĕтел патне пырса заем илме çырăнаççĕ. Пурте вĕсем правительство çĕнĕ заем кăларма йышăннине чĕререн ырлаççĕ, заема пĕр уйăхри ĕç укçинчен кая мар, чылай рабочисемпе служащисем пилĕк-улттă эрнери ĕç укçи чухлĕ илме çырăнаççĕ.

Правительство постановленине пĕлтернĕ хыççăн çĕнĕ заема çырăнасси ытти цехсенче те политикăллă пысăк çĕкленӳпе пулса иртрĕ. Рабочисемпе служащисем, инженерсемпе техниксем çĕнĕ заема пурте пĕр шухăш-кăмăлпа çырăнса илеççĕ.

Н. МИНИН.

ВЦСПС Президиумĕнче

СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заема (1952 çулхи кăларăм) сарас ĕçе профсоюз организацийĕсем хутшăнасси çинчен

Совет Союзĕнчи ĕççыннисем, коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, аслă Сталин çул кăтартса пынипе, вăрçă хыççăнхи пĕрремĕш пилĕк çуллăх плана ăнăçлă тултарчĕç, 1951 çулта мирлĕ ĕçре çĕнĕ çĕнтерӳсем турĕç.

1951 çулта промышленноçпа ялхуçалăх производствинче çитĕнӳсем тунă, ĕç тухăçлăхĕ ӳснĕ тата продукцин хăйне ларакан хакĕ йӳнелнĕ май, 1952 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен массăсене кулленкирлĕ апат-çимĕç таварĕсене ваккăн сутмалли государственнăй хаксене çĕнĕрен—пиллĕкмĕш хут—йӳнетнĕ. Çак пысăк ĕç коммунистсен партийĕ, Совет правительстви тата И. В. Сталин юлташ халăх пурнăçне пĕрмаях малалла лайăхлатса пырассишĕн яланах тăрăшнине тепĕр хут кăтартса парать.

Коммунизм тумалли сталинла аслă программăна пурнăçласа, совет халăхĕ социализмла экономикăна аталантарас ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем турĕ. Рабочисем, хресченсем, наукăпа техника енĕпе ĕçлекенсем государство планĕсене срокчен пурнăçлассишĕн, промышленноçа, транспорта тата ялхуçалăхне техника тĕлĕшĕнчен малалла вăйлатса пырассишĕн, пирĕн çĕршывра пурлăхпа культура пуянлăхĕсене питĕ нумай туса хатĕрлессишĕн социализмла ăмăртса ĕçлессине пысăк çĕкленӳпе тата анлăрах сарса пыраççĕ. Атăлпа Днепр çинче, Донпа Аму-Дарья çинче коммунизмăн аслă стройкисене туни пирĕн пĕтĕм экономика, наукăпа техника малалла çĕнĕ пысăк утăм тунине пĕлтерет.

Пирĕн Тăван çĕршыври ĕççыннисем ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджечĕ çинчен йышăннă закона, Совет государствин мирлĕ политикине палăртса тăракан закона патриотла хаваслă шухăш-туйăмпа кĕтсе илчĕç. Правительство решенийĕ тăрăх СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй çĕнĕ заем кăларнă. Ку заем халăх хуçалăхĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çак заем халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсене те малалла аталантарса пыма, ССР Союзĕн экономикăллă вăй-хăватне тĕреклетме, совет халăхĕн пурнăçне лайăхлатма тата унăн культурине ӳстерме пулăшать.

Пĕтĕм Союзри Профсоюзсен Центральнăй Совечĕн президиумĕ пур профсоюз организацийĕсене те çапла тума хушать: СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заема (1952 çулхи кăларăм) рабочисем, служащисем, интеллигенци тата Совет Союзĕнчи мĕнпур ĕççыннисем хушшинче сарас ĕçе активлă хутшăнмалла.

Профсоюз организацийĕсен çĕнĕ заем пирĕн çĕршывра халăх хуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсене тата культурăна малалла аталантарас ĕçре, пĕтĕм тĕнчери мира тĕреклетес ĕçре мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен рабочисем, служащисем тата интеллигенци хушшинче ăнлантарса парас ĕçе анлă сарас пулать.

ВЦСПС президиумĕ промышленноçри, транспортри, строительствăри мĕнпур рабочисене, ялхуçалăх работникĕсене, инженерсене, техниксене, служащисене, наукăпа искусство работникĕсене, Совет Союзĕнчи мĕнпур ĕççыннисене СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заема виçĕ-тăватă эрнери ĕç укçи чухлĕ çырăнса илме чĕнет.

СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заема пурте пĕр кăмăллă пулса çырăнса илнипе совет халăхĕ хамăрăн социализмлă Тăван çĕршыва, коммунистсен партине, Совет правительствине, аслă çулпуçăмăрпа учителĕмĕре И. В. Сталин юлташа чунтан-чĕререн юратнине тата тепĕр хут кăтартса парĕ.

ВЦСПС ПРЕЗИДИУМĔ.

Халăх хуçалăхĕн çĕнĕ ӳсĕмĕсемшĕн

Шупашкарти пир-авăр фабрикинчи рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем СССР Министрĕсен Совечĕ çĕнĕ заем кăларасси çинчен йышăннă постановленине савăнса кĕтсе илчĕç.

Фабрикăра нумай çынлă митинг пулчĕ.

— Пирĕн фабрика коллективĕ,—терĕ митингра фабрика директорĕ Бекренев юлташ,—социализмлă ăмăртура çитĕнӳсем турĕ. Тăватă уйăхри плана срокчен тултарнă. 1952 çулхи пĕрремĕш кварталта СССР Çăмăл промышленность министерствин предприятийĕсем хушшинче пыракан социализмлă ăмăртура виççĕмĕш вырăна тухнă.

Бекренев юлташ çĕнĕ заема пĕр çын пек пулса çырăнса илме, малашне те пысăк хастарлăхпа ĕçлеме чĕнчĕ.

Унтан работница М. Сисикина юлташ сăмах илчĕ.

— Тăван çĕршыв ӳссе вăйланса пынине эпир хамăр куçпа курса тăратпăр. Пăхăр-ха Шупашкар çине! Çĕнĕ предприятисем хăвăрт ӳссе лараççĕ. Хулари чи пысăк стройка—пир-авăр комбиначĕ ӳсет. Государствăн çĕнĕ заемĕ Тăван çĕршыва татах та вăйлатма пулăшĕ.

Çип арлакан Нуждаева юлташ та хумхануллă сăмах каларĕ.

— Эпир телейлĕ вăхăтра пурăнатпăр,—терĕ вăл.—Тăван çĕршыв ӳссе чечекленни пире чунтан савăнтарать. Юратнă çĕршывăмăр татах ӳссе хăватлантăр. Манăн уйăхри ĕç укçи—720 тенкĕ. Эпĕ 1952 çулта кăларнă заема 950 тенкĕлĕх çырăнатăп, ытти юлташсене те уйăхри ĕç укçинчен ирттерсе çырăнма чĕнетĕп.

Митингра çавăн пекех пир тĕртекен В. Горчаковăпа В. Григорьева, çип арлакан Р. Яковлева тата ытти юлташсем те тухса каларĕç. Вĕсем пурте заем кăларнине ырларĕç, уйăхри ĕç укçинчен чылай ирттерсе заем çырăнса илме пулчĕç.

Колхозниксен хаваслăхĕ

ЕЛЧĔК, майăн 6-мĕшĕ. (Телефонпа). Районти ĕççыннисем СССР Министрĕсен Совечĕ Халăх хуçалăхне аталантармалли заем кăларни çинчен пĕлтернине пысăк савăнăçпа кĕтсе илчĕç. Çак хыпара пур предприятисемпе колхозсенче те радио тăрăх пĕрле пухăнса итлерĕç.

Паян Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕсен пĕрлехи пухăвĕ пулса иртрĕ. Колхоз членĕсем çĕнĕ заема пурте пĕр кăмăлла пулса çырăнаççĕ.

— Правительство çĕнĕ заем кăларни колхозлă ял культурине ӳстерме, колхозниксен пурнăçне малалла лайăхлатма май парĕ,—терĕ митингра 68 çулхи колхозник М. Васильев юлташ.—Заем укçи коммунизмăн аслă стройкисене тăвас ĕçе кайĕ. Çакă пирĕн çĕршывăн вăй-хăватне тата ӳстерĕ. Эпĕ çĕнĕ заема 200 тенкĕлĕх çырăнатăп.

Вăрçă инваличĕ Спиридонов юлташ 200 тенкĕлĕх, М. Сапожников колхозник 500 тенкĕлĕх тата ытти чылай колхозниксем 500—600-шар тенкĕлĕх заем илме çырăнчĕç.

— Заем укçи ялхуçалăхне механизацилеме, промышленноçа хăвăрт аталантарма кайĕ. Эпĕ çĕнĕ заема 2.000 тенкĕлĕх çырăнатăп,—терĕ колхоз председателĕ Социализмлă Ĕç Геройĕ В. Зайцев юлташ.

Колхоз членĕсем малтанхи кун пурĕ 80 пин тенкĕлĕх заем илме çырăнса укçине икĕ кун хушшинче парса татма пулчĕç.

Аслă Елчĕкри Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсен митингĕ политикăллă пысăк çĕкленӳпе иртрĕ. Митингра колхоз председателĕ Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Г. Тябуков юлташ сăмах тухса каларĕ.

— Капитализмлă çĕршывсенче империалистсем çĕнĕ вăрçа хатĕрленеççĕ. Пирĕн Тăван çĕршыв мирлĕ ĕçпе пурăнать, коммунизмăн аслă стройкисене тăвать. Çав стройкăсене тума укçа-тенкĕ нумай кирлĕ. Çавăнпа хамăрăн перекетленнĕ укçа-тенке государствăна кивçен парса пулăшар. Эпĕ çĕнĕ заема 1.500 тенкĕлĕх çырăнатăп, 1.000 тенкине халех паратăп,—терĕ Тябуков юлташ.

Çĕнĕ заем илме çырăнасси ытти колхозсенче те политикăллă пысăк активлăхпа пулса пырать.

Н. НИКИТИН.

Пысăк выляв

Шупашкарти Чапаевски поселокра пурăнакан çамрăк рабочи В. А. Тимохин юлташ Государствăн тăваттăмĕш заемĕн юлашки выляввĕнче 50 пин тенкĕ выляса илнĕ.

Тимохин юлташ çĕнĕ заема пилĕк уйăх çурăри ĕç укçи чухлĕ 6.700 тенкĕлĕх çырăннă.

П. ЕФИМЕНКО.

Государствăн çĕнĕ заемĕ

СССР халăх хуçалăхне малалла аталантарас, Атăл çинче Куйбышевпа Сталинград гидроэлектростанцийĕсене тума, Туркменири тĕп канала, Кăнтăр Украина тата Çурçĕр Крым каналĕсене тума укçа-тенкĕ парса тăрас ĕçе халăх укçи-тенкине хутшăнтарас тĕллевпе ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕ СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заем (1952 çулхи кăларăм) 30 миллиард тенкĕлĕх кăларма йышăнчĕ.

Заем çырăнса илес ĕç кăçал та, иртнĕ çулхисенчи пекех, политикăлли пысăк çĕкленӳпе пулса иртĕ. Рабочисем, хресченсем, служащисем заем çырăнас ĕçе хутшăннине хăйсен гражданла тивĕçĕ тесе шутлаççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсем çакна пĕлсе тăраççĕ: вĕсем государствăна кивçен паракан укçа-тенкĕ социализмлă экономикăпа культурăна аталантарма, коммунизм тумалли сталинла плана пурнăçлама каять. Заем укçи промышленноспа ялхуçалăх производствине вăйлатма, транспорта аталантарма, наукăпа культурăна чечеклентерме, халăх пурнăçне лайăхлатма пулăшать.

Социализмлă экономикăпа культурăн пур отраслĕсем те малалла хăватлăн аталанса пыраççĕ. Социализмлă промышленность туса кăларакан продукци 1951 çулта вăрçăченхи шайран икĕ хут ытларах пулнă, вăл малалла та хăвăрт ӳссе пырать.

Промышленность техникăпа хĕçпăшалланса пыни, рабочисен квалификацийĕ ӳсни, производствăна организацилессине лайăхлатни ĕç тухăçлăхне татти-сыпписĕр ӳстерсе пыма, туса кăларакан продукцин хăйне ларакан хакне пĕрмай йӳнетсе пыма май парать. ССР Союзĕн пĕтĕм промышленноçĕ 1952 çулхи пĕрремĕш кварталта, 1951 çулхи пĕрремĕш кварталтипе танлаштарсан, 16 процент ытларах продукци туса кăларнă. Çав вăхăтрах ĕç тухăçлăхĕ 10 процент ӳснĕ.

1951 çулта социализмлă ялхуçалăхĕ пысăк çитĕнӳсем турĕ. Ялхуçалăх производстви техникăпа ытларах хĕçпăшалланчĕ, ĕçсене организацилесси лайăхланчĕ, çĕрĕçĕпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ăста кадрсен йышĕ нумайланчĕ. Çакă вăл тырпул тухăçлăхне малалла ӳстерме, обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе пĕрмай аталантарма май парать.

Кăçал коммунизмăн аслă стройкисене тăвас тĕлĕшпе ĕçсем тата анлăрах саралаççĕ. Строительство ĕçĕсен пысăкăшĕ, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, Куйбышев гидроэлектростанцине тунă çĕрте — икĕ хут ытла, Сталинград гидроэлектростанцине тунă çĕрте—2,5 хут ытла, Кăнтăр Украина тата Çурçĕр Крым каналĕсене тунă çĕрте—3,5 хут ӳсет.

Социализмла экономика аталаннă май наци тупăшĕ хăвăрт ӳсет. Совет Союзĕнче наци тупăшĕ пĕтĕмĕшпех ĕççыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтерме каять.

1951 çулта ССР Союзĕнчи ĕççыннисем хăйсен пурнăçпа культура ыйтăвĕсене тивĕçтерме, пĕлтĕрхи пекех, наци тупăшĕнчен тăватă пайран виçĕ пайне ахăн илнĕ. Наци тупăшĕн ытти пайĕ государство, колхозсемпе кооперации организацийĕсен аллинче юлнă, вăл социализмла производствăна аслăлатма тата государствăпа обществăн ытти ыйтăвĕсене тивĕçтерме каять.

Социализмлă государство халăхăн пурнăçпа культура ыйтăвĕсене тивĕçтерессишĕн куллен тăрăшать.

Партипе правительство халăх пурнăçне лайăхлатассишĕн тăрăшнине куллен кирлĕ таварсен хакĕсене тăтăшах йӳнетсе пыни, таварсем туса кăларассине тата халăха таварсем сутассине ӳстерни уççăн кăтартса парать.

1952 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнче апатçимĕç таварĕсен хакĕсене йӳнетнипе халăх 28 миллиард тенкĕ ытла усă курать. Вăрçă хыççăнхи çулсенче товар хакĕсене йӳнетнине пула халăх пĕтĕмпе çĕршер миллиард тенкĕлĕх усă курнă.

Таварсен ваккăн сутмалли государственнăй хакĕсене йӳнетсе пынă май рабочисемпе служащисен реальнăй ĕç укçи малалла ӳссе пырать, колхоз хресченĕсем пысăк усă кураççĕ, совет укçи-тенки çирĕпленет.

Иртнĕ çулта, Сталин юлташ пуçарнипе, Совет правительстви промышленноçпа апат-çимĕç таварĕсене çулталăкри план тăрăх палăртнинчен ытларах туса кăларма мерăсем йышăнчĕ. Планран иртерсе пир-авăр, çĕлĕнĕ тумтир, атă-пушмак, çу, сахăр, консервăсем тата ытти таварсем нумай туса кăларнă. Кăçал халăха куллен кирлĕ таварсем туса кăларас ĕç татах вăйланать.

Социализмлă промышленноçа, транспорта, ялхуçалăхне малалла аталантармалли, товар çаврăнăшне ӳстермелли, совет халăхĕн пурнăçне малалла лайăхлатмалли плансем нумай пулмасть СССР Верховнăй Совечĕн виççĕмĕш сессийĕ çирĕплетнĕ ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджетĕнчи цифрăсенчен лайăх курăнса тăраççĕ.

Бюджетри укçа-тенкĕн чи пысăк пайне халăх хуçалăхĕ валли, социальнăй ĕçсемпе культура ĕçĕсем валли каять.

Халăх хуçалăхне укçа-тенкĕ парса тăма 1952 çулхи бюджетра 180,4 миллиард тенкĕ палăртнă. Ку вăл мĕнпур расходсенчен 37,8 процент чухлĕ пулать. Халăх хуçалăхĕ валли уйăрса паракан укçа-тенкĕн пысăк пайĕ капитальнăй ĕçсем тунă çĕре каять. 1952 çулта пĕтĕмпе капитальнăй ĕçсем тума 143,1 миллиард тенкĕ уйăрса пама палăртнă, вăл шутра бюджетран уйăрса паракан укçа-тенкĕ 98,1 миллиард тенкĕ чухлĕ пулать.

Капитальнăй ĕçсем валли укçа-тенкĕ нумай уйăрни çĕнĕрен фабрикăсемпе заводсем, шахтăсем, машина-трактор станцийĕсем, пурăнмалли çуртсемпе шкулсем тума май парать.

Совет правительстви культурăна наукăна тата ытти социальнăй ĕçсемпе культура ĕçĕсене аталантарма питех те нумай укçа-тенкĕ расходлать. ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджетĕнче социальнăй ĕçсемпе культура ĕçĕсем валли 124,8 миллиард тенкĕ расходлама палăртнă. Ку вăл бюджетри мĕнпур расходсенчен 26,2 процент чухлĕ пулать. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан, çак тĕллевпе тухакан расходсем 5,9 миллиард тенкĕ чухлĕ ӳсеççĕ.

Социальнăй ĕçсемпе культура ĕçĕсем валли укçа-тенкĕ расходлани 1952 çулта халăха вĕрентес тата сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен учрежденисен шутне, шкулсенче, техникумсенче, аслă шкулсенче вĕренекенсен хисепне малалла ӳстерме май парать.

Вăрçăченхи вăхăтрах пур ачасене те тăватă çул вĕрентес задачăна ăнăçлă пурнăçласа, Совет государстви хальхи вăхăтра пур çĕрте те ачасене çичĕ çул вĕрентмелли йĕркене пурнăçласа пырать, çавăн пекех вунă çул вĕрентес ĕçе те аталантарма тăрăшать. 1952 çулта аслă шкулсенче 1.416.000 студент, урăхла каласан, пĕлтĕрхинчен 60.000 çын ытларах вĕренмелле.

ССР Союзĕн государство бюджетĕнче республикăсен тата вырăнти бюджетсем пысăк вырăн йышăнаççĕ: ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджетĕнче союзлă республикăсен бюджечĕсене пĕтĕмпе 98,8 миллиард тенкĕ чухлĕ çирĕплетнĕ, вăл шутран (расходсем енĕпе): республикăсен бюджечĕсем—30,4 миллиард тенкĕ, вырăнти бюджетсем—68,4 миллиард тенкĕ. Республикăсен тата вырăнти бюджетсем тăрăх расходланакан укçа-тенкĕрен пысăк пайĕ халăха вĕрентес, сывлăха сыхлас, социальнăй обеспечени ĕçĕсем валли, коммунальнăй хуçалăха тата пурăнмалли çуртсем тăвас ĕçе аталантарма, республикăсенчи тата вырăнти промышленноçпа халăх хуçалăхĕн ытти отраслĕсене аталантарма каять.

Республикăсенчи тата вырăнти бюджетсенче тупăшсенче государство заемĕсенчен пухăнакан укçа-тенкĕ пысăк вырăн йышăнать. Çав бюджетсене заем укçинчен 50 процент чухлĕ уйăрса параççĕ.

Пирĕн çĕршывра хуçалăхпа культура строительствинчи питех те пысăк задачăсене пурнăçлама нумай укçа-тенкĕ кирлĕ.

Совет государствин расхочĕсем валли палăртнă укçа-тенкĕ шутĕнче социализмлă хуçалăхран хăйĕнчен кĕрекен укçа-тенкĕ — промышленноçăн, ялхуçалăхĕн, суту-илӳн тата халăх хуçалăхĕн ытти отраслĕсен тупăшĕ тĕп вырăн йышăнать. ССР Союзĕн государство бюджетĕнчи тупăшсенчен 80 проценчĕ социализмлă хуçалăхран пухăнать.

Бюджетăн тупăш пайĕнче çавăн пекех государство заемĕсене сарнипе халăхран пухăнакан укçа-тенкĕ пысăк вырăн йышăнать.

Государство заемĕсене кăларма тытăнни 30 çул çитет. Çак вăхăтра вĕсем питех те анлăн саралчĕç, çĕршывăн хуçалăхпа политикăлла пурнăçĕнче палла вырăн йышăнчĕç. Вуншар миллион совет гражданĕсен аллинче заемсен облигацийĕсем пур. Совет заемĕсем—халăх заемĕсем пулса тăраççĕ. Заема кăларнă суммăран яланах иртерсе çырăнса илеççĕ. Пĕлтĕр СССР халăх хуçалăхне малалла аталантармалли заема (1951 çулхи кăларăм) 30 миллиард тенкĕлĕх кăларни çинчен пĕлтернĕ пулсан, ăна 34,8 миллиард тенкĕлĕх вырнаçтарнă. Ĕççыннисен тупăшĕ малалла ӳссе пыни кăçал заем суммине пĕлтĕрхинчен ытларах ӳстерме лайăх условисем туса парать. Анчах та правительство заема 30 миллиард тенкĕлĕх, урăхла каласан, иртнĕ çулта кăларнă чухлех кăларма йышăнчĕ. Нимĕн иккĕленмелли те çук, кăçал та заема палăртнинчен чылай иртерсе çырăнса илĕç.

Государство заемĕсем çакăн пек ăнăçлă сарални совет çыннисен патриотла ăнлануллăхĕ пысăк пулни çинчен, вĕсем социализмлă Тăван çĕршыва чĕререн парăнса тăни, Ленин—Сталин партийĕ таврара тачă пĕтĕçни, пĕтĕмĕшпех коммунизм туса çитерессишĕн ырми-канми кĕрешме хатĕр пулни çинчен калать. ССР Союзĕн государство кредитне малалла аталантарни совет халăхĕ умĕнче коммунизм строительствин планĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе тăракан çĕнĕ пысăк задачăсене ăнăçлă пурнăçа кĕртме пулăшать.

Совет заемĕсем социализмлă государствăна расходсене ӳстерме май панипе пĕрлех заем çырăнса илекен ĕççыннисене пысăк тупăш параççĕ, заем çырăнса илекенсем нумай выляв укçи илеççĕ. Вăрçă хыççăнхи çулсенче кăна заем облигацийĕсем тăрăх 22 миллиард тенкĕлĕх выляв укçи тӳленĕ, вăл шутра 1951 çулта—5 миллиард тенкĕ тӳленĕ. 1952 çулта халăха выляв укçи тата ытларах—7 миллиард тенкĕ тӳлеме палăртнă.

Совет заемĕсем капитализмлă государствăсен заемĕсенчен тĕпренех урăхла. Капитализмлă государствăсенче заемсем кăларнипе пухнă укçана хăйсен бюджечĕсен тупăшĕсемпе расхочĕсене шайлаштарма, бюджетри парăмсене витме яраççĕ, вĕсен бюджечĕсем агрессилле çĕнĕ вăрçă хатĕрлемелли бюджетсем пулса тăраççĕ.

Тĕнчери çĕнĕ вăрçă хатĕрлес ĕçе вăйлатса, США ертсе пыракан империализмлă лагерьти çĕршывсем асăннă тĕллевпе пурнăçлама бюджетри укçан питĕ пысăк пайне расходлаççĕ, пĕтĕм хуçалăха çар валли ĕçлесе тăракан хуçалăх туса пыраççĕ, хĕçпăшал туса хатĕрлес ĕçе вăйлатаççĕ, гражданла промышленноçа чакараççĕ.

США-ра çар валли паракан укçа хисепĕ, официальнăй сведенисем тăрăх та, иртнĕ çулталăкра виçĕ хут ытла ӳснĕ, хальхи вăхăтра çав укçа хисепĕ пĕтĕм бюджетăн 80 проценчĕ ытла шутланать. Юлашки çулсенче Францин, Англин тата Италин çар расхочĕсем çав тери нумай ӳссе кайнă. Капиталистсен монополийĕсем нихçанхинчен те нумайрах услам илме тăрăшса, хĕçпăшал нумай хатĕрленине тата хуçалăха çар валли ĕçлекен хуçалăх туса хунине пула ĕççыннисен пурнăçĕ чухăнланса пырать.

Капитализмлă пур çĕршывсенче те ĕçсĕр тăрса юлнă çынсен шучĕ ӳсет, ĕççыннисене эксплуатацилесси вăйланса пырать, реальнăй ĕç укçи чакать, халăха куллен кирлĕ таварсем пĕрмаях хакланса пыраççĕ, налогсем ӳсеççĕ.

Хальхи вăхăтра тӳрремĕн пухакан налогсем тата ытти тĕрлĕ майсемпе илекен налогсем США-ра рабочисемпе служащисен ĕç укçин 40 проценчĕ ытла, Англире рабочисемпе служащисен ĕç укçин çурри ытла шутланаççĕ.

Васкаса хĕçпăшал нумай хатĕрлени тата ĕççынни массисене питĕ хытă эксплуатацилени капиталистсен монополийĕсене питĕ пысăк услам парать. 1951 çулта Америкăри монополисен усламĕсем çĕршыв историйĕнче халиччен нихçан пулман хисепе çитнĕ. Унти монополисем 40 миллиард доллар яхăн услам илнĕ. Ку вăл монополисем тĕнчери иккĕмĕш вăрçă тапхăрĕнче кашни çул вăтам шутпа илнĕ усламран икĕ хут нумайрах, вăрçă умĕнхи çулсенче илнĕ усламран 8 хут нумайрах.

США-ра тата империализмлă лагерьти ытти çĕршывсенче те çар расхочĕсем çав тери нумай ӳсни вĕсен экономикине тата финанс тĕлĕшĕнчи лару-тăруне хытă начарлатать. 1951—1952 бюджет çулĕн малтанхи çур çулĕнче США бюджечĕнче расходсене витме 7,5 миллиард доллар çитмен, ку вăл бюджетри мĕнпур расходсен тăваттăмĕш пайĕпе танлашать.

Англипе Франци бюджечĕсенче те расходсене витме укçа нумай çитмест, капитализмлă çĕршывсен бюджечĕсенче укçа çитмен пирки расходсене витме налогсене ӳстереççĕ, хут укçа нумай кăлараççĕ, унта государство парăмĕ ӳсет.

Капитализмлă çĕршывсенче государство заемĕсене кăларни эксплуататорла классем пуймалли çăлкуççенчен пĕри пулса тăрать, халăхран пухакан налогсем татах та ӳсесси патне, ĕççыннисем тата ытларах чухăнланса юласси патне илсе пырать.

Совет заемĕсемпе капитализмлă государствăсенчи заемсем хушшинчи уйрăмлăх социализмлă хуçалăхпа капитализмлă хуçалăх пĕр-пĕринчен пачах урăхла пулнинчен килет.

Совет заемĕсем пирĕн çĕршыври хуçалăхпа культура строительствинчи задачăсене пурнăçлама укçа паракан çăлкуççенчен пĕри пулса тăраççĕ.

СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заема (1952 çулхи кăларăм) Совет правительстви пĕлтĕрхи условисемпех кăларнă. Заема 20 çуллăха кăларма йышăннă.

Заем облигацийĕсем тăрăх пĕтĕм тупăша выигрышсемпе тӳлеççĕ. Заемăн 100 тенкĕлĕх облигацийĕ çине 25.000, 10.000, 5.000, 1.000, 500 тата 200 тенкĕлĕх выигрышсем пулаççĕ, кунта облигаци хакĕ те кĕрет. Заемăн выляса илмен облигацийĕсене 1957 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 15 çул хушшинче, заем срокĕ тухиччен, хăйсен хакĕ чухлĕ укçа тӳлесе каялла илеççĕ.

СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заема вырнаçтарасси Совет государствин хуçалăхла-политикăллă пысăк ĕçĕ пулса тăрать. Çак ĕç ăнăçлă пулса пырасси заем сарас ĕçе предприятисенче, учрежденисенче тата колхозсенче лайăх организацилениннчен килет. Предприятисенче, учрежденисенче, колхозсенче, совхозсенче, машина-трактор станцийĕсенче массăллă ăнлантару ĕçне анлă сарнипе хуларипе ялти мĕнпур ĕççыннисене заем илме çырăнтармалла.

Ĕççыннисене заем пĕтĕм халăх ĕçĕ пулни çинчен, заем укçи çĕршывăн хуçалăхĕпе культурине малалла вăйлатса пыма, Совет Союзĕн вăй-хăватне малалла тĕреклетсе пыма пулăшни çинчен ăнлантарса парас пулать. Рабочисемпе служащисем хушшинче заем сарас ĕçре государство кредичĕпе перекетлĕх ĕçне пулăшса тăракан комиссисем пысăк вырăн йышăнса тăмалла. Вĕсен заем илме çырăнтарнипех лăпланса лармалла мар, заем укçине тӳленине, çав укçана шута илсе пынине яланах тĕрĕслесе тăрас пулать.

Парти организацийĕсемпе обществăллă организацисен задачи комсодсене çирĕплетесси, комсодсенче ĕçлеме авторитетлă общественниксемпе организаторсене уйăрса лартасси, вĕсен ĕçне тăтăшах тĕрĕслесе тăрасси пулать.

«Виç-тăватă эрнери ĕç укçине государствăна кивçен парар!»—çак лозунгпа иртермелле заем сарас ĕçе.

Заема ялта сарас тĕлĕшпе уйрăмах тимлĕ ĕçлемелле пулать. Ĕç ăнăçлă пулса пырасси ял Совечĕсен заем уполномоченнăйĕсем пулма тивĕçлĕ çынсене уйăрниннчен нумай килет. Уполномоченнăйсем пулма колхозри общественноçăн тата ялти интеллигенцин авторитетлă тата пуçарулла представителĕсене уйăрас пулать. Вĕсен ĕçне партипе совет организацийĕсен тăтăшах контроллесе тăмалла тата вĕсене ĕçре пулăшса пымалла.

Çĕнĕ заема ăнăçлă сарни Совет государствин экономикăллă вăй-хăватне тата ытларах тĕреклетет, совет халăхĕн пурнăçне тата малалла лайăхлатма пулăшать.

А. ЗВЕРЕВ,
СССР Финанс министрĕ.

ВКП(б) Чăваш обкомĕнче

Çуракинче МТС-сен трактор паркĕпе çителĕксĕр усă курни çинчен

ВКП(б) обком бюровĕ çакна палăртнă: нумай парти райкомĕсемпе райисполкомсем МТС-сен ĕçне çителĕксĕр ертсе пыраççĕ, суракинче МТС-сен техникипе пысăк тухăçлăхпа ĕçлесси çине кирлĕ пек çаврăнса пăхмаççĕ, кашни тракторпа пысăк тухăçлăхпа ĕçлессишĕн МТС руководителĕсен—директорсен, вĕсен политика енĕпе ĕçлекен заместителĕсен, главнăй механиксен, агрономсен, МТС-сенчи парти организацийĕсен тата коммунист-механизаторсен ответлăхне ӳстермеççĕ.

Çаксене пула республикăри мĕнпур трактор паркне халĕ те уй-хир ĕçĕсем тума хутшăнтарман. Нумай МТС-сенче тракторсемпе икĕ сменăпа ĕçлессине организацилемен, чылай тракторсемпе ĕçлекенсем сменăри нормăсене тултармаççĕ, тракторсен хăвачĕпе туллин усă курманнине кăтартса паракан нумай тĕслĕхсем пур.

Чылай МТС-сенче сурхи ĕçсем пуçланнă малтанхи кунсенчех тĕрлĕ кăлтăксене пула тракторсем нумай вăхăт хушши ĕçлемесĕр лараççĕ. Çакă вăл трактор бригадисене техника тĕлĕшĕнчен пулăшассине начар йĕркеленинчен килет. Кунпа пĕрлех колхозсем трактор бригадисене начар пулăшни палăрать. Уйрăм колхоз председателĕсем, парти райкомĕсемпе райисполкомсем асăрхаса тăманнине пула, трактор бригадисене горючи тата шыв вăхăтра кӳрсе парассине йĕркеленеççĕ, прицепщиксем суйласа илес ĕç çине тимсĕр пăхаççĕ, трактористсене ĕçлеме кирлĕ условисем туса памаççĕ. Уйрăм тимсĕр трактористсем тăпрана япăх çемçетсе хатĕрлеççĕ.

Суракинче тракторсемпе усă курас ĕç çине нумай ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсем, МТС-семпе колхоз руководителĕсем çакăн пек пăхнине чăтма çук тесе тата çакă вăл суракине вăраха яма, тырпул тухăçлăхне чакарма пултарать тесе, ВКП(б) обком бюровĕ çапла йышăннă:

1. ВКП(б) райкомĕсене кашни трактор мĕншĕн япăх ĕçленине пĕр тăхтаса тăмасăр палăртма, суракинче трактор паркĕпе лайăх ĕçлессине йĕркелеме халех мерăсем йышăнма хушас.

2. ВКП(б) райкомĕсен пĕрремĕш секретарĕсене, райисполком председателĕсене тата МТС директорĕсене сураки ĕçĕсене тума мĕнпур тракторсене çак икĕ кун хушшинче хутшăнтарма, кашни тракторпа икĕ сменăпа ĕçлемелле, механизаторсем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе вăйлатса тата вĕсен ĕçне тĕрĕслесе тăрса, мĕнпур трактористсем сменăри задачисене тултармалла тума хушас.

3. ВКП(б) райкомĕсен тата райисполкомсен суракинче тракторсемпе пысăк тухăçлăхпа ĕçлес тĕлĕшпе, МТС-семпе колхозсем хушшинче тунă договорсене пурнăçлассишĕн, тракторпа тăвакан ĕçсен пахалăхне лайăхлатассишĕн МТС руководителĕсен ответлăхне ӳстермелле, çавăн пекех колхозсем енчен трактор бригадисене пулăшса тăрассине йĕркелеме мерăсем йышăнмалла.

4. ВКП(б) райкомĕсене, МТС директорĕсене, вĕсен политика енĕпе ĕçлекен заместителĕсене, МТС-сенчи парторганизацисене суракинче трактористсен ăмăртăвне, республикăри ялхуçалăх работникĕсем Сталин юлташ патне çырнă çырура илнĕ обязательствăсене пурнăçлассишĕн ăмăртăва анлă организацилеме хушас.

Механизаторсем хушшинче социализмлă ăмăрту итогĕсене кашни пилĕккунлăх вĕçĕнче тумалла.

Республикăри «Советская Чувашия», «Коммунизм ялавĕ», «Çамрăк большевик» хаçат редакторĕсене тата районсенчи хаçатсен редакторĕсене хаçатсен страницисенче механизаторсен ăмăртăвне тăтăшах çутатма, ăмăртура малта пыракансене кăтартма тата вĕсен опытне кăтартса пама хушас.

5. Республикăри Ялхуçалăх министерствине (Мартынов тата Шорников юлташсене) машина-трактор станцисене ертсе пырассине, уйрăмах техника тĕлĕшĕнчен пулăшассине йĕркелеме хушас; МТС директорĕсене, главнăй механиксене трактор бригадисене техника енĕпе пулăшса тăрассине лайăхлатма хушас.

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи КОЛХОЗСЕНЧЕ ÇУРАКИ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

1952 çулхи майăн 5-мĕшĕ тĕлне (процентпа)

Районсем	Пĕтĕмĕшпе акнă	Вăл шутран тулă	Калчасене апат панă
Улатăр	16,0	33,9	37,5
Элĕк	14,1	23,3	38,3
Вăрнар	15,7	26,5	61,9
Йĕпреç	13,9	28,8	49,2
Ишлей	7,4	10,0	101,9
Калинино	15,9	25,7	51,4
Канаш	18,9	44,1	56,0
Куславкка	5,2	8,4	67,1
Комсомольски	32,9	68,3	71,0
Красноармейски	34,4	50,2	59,0
Хĕрлĕ Чутай	9,3	23,0	55,9
Кувакино	36,4	70,0	39,2
Сĕнтĕрвăрри	10,6	12,6	84,1
Мурваш	20,2	30,3	66,8
Октябрьски	5,6	6,1	85,3
Первомайски	26,5	51,1	69,6
Нăрачкав	36,9	80,9	27,7
Советски	17,8	19,8	58,0
Сĕнтĕр	10,8	17,1	55,4
Вăрмар	15,0	9,5	56,5
Çĕрпӳ	12,7	8,8	78,7
Шупашкар	8,1	3,9	53,0
Чкаловски	30,0	55,5	58,8
Чурачăк	27,9	36,3	75,7
Шăмăршă	25,4	49,8	52,2
Шăхасан	24,3	34,5	70,2
Çĕмĕрле	9,6	21,1	71,9
Етĕрне	14,4	20,4	71,0
Елчĕк	21,8	45,1	61,9
Тăвай	15,8	12,4	86,5

* * *

Республикăри малта пыракан Нăрачкав, Кувакино, Красноармейски, Комсомольски районĕсем майăн 5-мĕшĕ тĕлне мĕнпур çуртырисене 30 процент ытла, тулă 50—81 процент чухлĕ акнă. Анчах çав вăхăтрах Куславкка, Октябрьски, Ишлей, Шупашкар, Хĕрлĕ Чутай тата Çĕмĕрле районĕсенче çураки ытла пит вăраххăн сарăлса пырать, унта майăн 5-мĕшĕ тĕлне мĕнпур çуртырисене 10 процентран та сахал акнă. Тулă Шупашкар районĕнче 3,9 процент, Октябрьски районĕнче—6,1 процент, Куславкка районĕнче—8,4 процент çеç акнă.

Районсенчи руководительсем: Куславкка районĕнче ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Петрухин юлташ, райисполком председателĕ Прытченков юлташ, Октябрьски районĕнче—Петров тата Христофоров юлташсем, Ишлей районĕнче—Ашмарин тата Одинцов юлташсем, Шупашкар районĕнче—Никитин тата Семенов юлташсем, Хĕрлĕ Чутай районĕнче—Филиппов тата Осипов юлташсем, Çĕмĕрле районĕнче—Кузьмин тата Статуев юлташсем кăçалхи çуркунне кая юлса килнĕ условире çуракине кĕске срокра иртерессишĕн хăйсем уйрăмах ответлă пулса тăнине ăнланса илмен, çураки вăхăтĕнче МТС-семпе колхозсене çителĕксĕр ертсе пыраççĕ, МТС-сенчи механизаторсем, колхозниксемпе колхозницăсем çуракине агротехника тĕлĕшĕнчен чи лайăх срокра иртерессишĕн, вăйлă тырпул туса илме çирĕп никĕс хывассишĕн, Сталин юлташ патне янă çырура илнĕ обязательствăсене пурнăçлассишĕн ăмăртса ĕçлессине çителĕксĕр организацилеççĕ.

Асăннă районсенчи партипе совет тата ялхуçалăх органĕсен, МТС-сенчи механизаторсен, колхозниксемпе колхозницăсен çуракинче кая юлнине çак кунсенех пĕтермелле, республикăра малта пыракан районсенчен пример илсе, çуракине кĕске срокра туса иртермелле. Çавна пурнăçлама МТС-семпе колхозсенчи пĕтĕм вăй уй-хир ĕçне хутшăнтармалла, кашни тракторисăн, кашни колхозникăн, ĕçе питĕ лайăх туса, ĕç нормине тултарса пымалла тăвас пулать.

Аслă Сталина панă сăмаха чыслăн пурнăçлатпăр

Партипе правительство ялхуçалăх ĕçченĕсем умне ответлă задачăсем лартрĕç: çитес икĕ-виçĕ çул хушшинче кашни гектартан 18 центнертан кая мар тĕштырă пухса кĕртме тытăнмалла, ытти ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне те чылай ӳстермелле. Çавăн пекех обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе те çине тăрса ĕçлемелле.

Çак хисеплĕ задачăна пурнăçлама Совет правительстви пысăк пулăшу парать. Ялхуçалăхĕ çуллен вăйлă техникăпа хĕçпăшалланса пырать. Çулталăк каялла пирĕн районта машина-трактор станцийĕ организациленчĕ. Станци кĕске вăхăтрах çĕнĕ те вăйлă техникăпа пуянланчĕ. Халĕ пирĕн колхозсенче трактор бригадисем ĕçлеççĕ Вак колхозсене пĕрлештерсе пысăклатни артель хуçалăхĕнчи резервсемпе ытларах усă курма, вăйлă техникăпа тухăçлă ĕçлеме, колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен малалла çирĕплетсе пыма лайăх майсем туса пачĕ.

Партипе правительство колхозсемшĕн куллен тăрăшнипе хавхаланса, пирĕн артель членĕсем Сталин юлташ патне янă çырура кăçал кашни гектартан вăтам шутпа 110 пăт тĕштырă, 115 пăт ыраш, 900 пăт çĕрулми, 30 пăт кантăр вăрри, 35 пăт кантăр сӳсĕ пухса илме сăмах пачĕç, выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне пĕлтĕрхинчен икĕ хут ытларах ӳстерме пулчĕç. Халĕ пирĕншĕн аслă Сталина панă сăмаха пурнăçлассинчен пархатарлă задача урăх нимскер те çук. Пирĕн çуракине кĕске вăхăтра, малта пыракан агрономи науки вĕрентнĕ пек иртермелле.

Эпир малтан çуртрисене вунă кун хушшинче акса пĕтерме палăртнăччĕ. Анчах хамăрăн вăйсемпе майсене тĕплĕнрех шута илнĕ хыççăн ака вăхăтне кĕскетмелли майсем тупăнчĕç. Иртнĕ кĕркунне эпир, машина-трактор станцийĕ пулăшнипе, çуртри акмалли уйсене йăлтах тата лайăх пахалăхпа кĕрхи çĕртме туса хăвартăмăр. Çакă вăл çураки ĕçĕсене чылай çăмăллатать. Кунпа пĕрлех туртăм вăйĕпе туллин усă курмалли, ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пымалли майсене палăртрăмăр. Çапла вара, çуракине 8 кун хушшинче иртерме йышăнтăмăр.

Çуракине эпир кăçал халичченхи çулсенчен лайăхрах хатĕрлентĕмĕр. Çителĕклĕ таран таса та сортлă вăрлăх хатĕрлерĕмĕр, ĕç хатĕрĕсене тĕплĕн юсарăмăр. Çав вăхăтрах удобренисем хатĕрлес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлерĕмĕр. Органически удобренисем тырпул тухăçлăхне вăйлăн ӳстерни пуриншĕн те паллă, вăл япаласем хамăр патăртах. Анчах, калас пулать, вырăнти удобренисемпе ку таранччен кирлĕ пек усă курман. Кăçал вара лашасене мĕн канма тăратичченех удобренисем хатĕрлесе турттартăмăр. Ку таранччен уя 14.370 лав тислĕк, 11.250 лав торф, 1.320 лав юшкăн тăпри кăлартăмăр. Çак шутран çуррине ытла торфпа тислĕк хутăштарса компост турăмăр. Çавăн пекех 370 центнер кĕл, 336 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухрăмăр. Вак колхозсене пĕрлештеричченхипе танлаштарсан, кăçал вырăнти удобренисене вунă хут ытларах хатĕрлерĕмĕр. В. Емельянов, П. Захаров, П. Кузьмин юлташсем ертсе пыракан бригадăсем ку тĕлĕшпе уйрăмах хастарлă ĕçлерĕç.

Çурхи кун çулталăк тăрантарать, теççĕ. Çакна асра тытса, тырпул тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе чылай ĕçсем тума палăртрăмăр. Ыраш калчине пĕтĕм лаптăк çинче апат паратпăр тата сӳрелетпĕр. Халĕ колхозниксем вăл ĕçсене пысăк тимлĕхпе туса ирттереççĕ. Кашни гектар çине 5—6 центнер кĕлпе кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тата 6—7 тонна тислĕк шĕвекĕ кăларатпăр. Кĕркунне тăпра типĕ юлнă пирки калчасене апат парас ĕçре тислĕк шĕвекĕпе ытларах усă курма тăрăшатпăр. Кашни выльăх-чĕрлĕх вити патнех тислĕк шĕвекĕ пухмалли пысăк шăтăксем турăмăр. Калчасене апат парас ĕçе виçĕ-тăватă кун хушшинче туса иртертĕмĕр.

Вăйлă тырпулшăн кĕрешесси кунпах пĕтмест, çуртрисене вăхăтра акса хăварни уйрăмах пысăк вырăн йышăнать. Халĕ ака-суха ĕçĕсем пуçланчĕç. Çуртрисене пĕтĕмпех сортлă тата яровизациленĕ вăрлăхпа, кĕрхи çĕртме туса хăварнă пусăсене вăхăтра сӳрелесе, культивацпи туса, йăлтах хĕреслĕ майпа акатпăр. Ир акмалли культурăсене пилĕк-ултă кун хушшинче акса пĕтеретпĕр.

Кăçал пирĕн колхозра ятарласа уйăрнă трактор бригади ĕçлет. Ку бригадăн бригадирĕ, трактористсем тата ытти работникĕсем те хамăрăн колхозран. Халĕ эпир уй-хир бригадисемпе трактор бригади хушшинчи ĕçлĕ туслăха çирĕплетме тăрăшатпăр. Кунпа пĕрлех эпир çуракинче туртăм вăйĕпе туллин усă курмалла турăмăр.

Пирĕн колхозниксем, аслă Сталин умĕнче чыслă обязательствăсем илсе, вăйлă тырпул ӳстерес, йышлă та тупăшлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, ялхуçалăх çулне ăнăçлă вĕçлес тĕлĕшпе хамăр районти «Красное Сормово», Сталин ячĕпе тăракан тата «Свобода» колхозсемпе социализмлă ăмăртăва тухрĕç. Çавăн пекех колхозри кашни бригада пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлет. Иртнĕ çулта эпир, асăннă колхозсемпе ăмăртса ĕçлесе, тырпул тухăçлăхĕ енĕпе районта пĕрремĕш вырăн йышăнтăмăр. Кăçал та вăйлă тырпулшăн ывăнма пĕлми ĕçлеме пулатпăр. Аслă Сталина панă сăмаха чыслăн пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хуратпăр.

В. ИЛЬИН,
Энгельс ячĕпе тăракан колхоз председателĕ.

Мурваш районĕ.

Пысăк тухăçлăх кăтартаççĕ

Нăрачкав МТС-ĕнчи механизаторсем апрелĕн 27-мĕшĕнче çуракине массăллăн тытăнчĕç. Вăл кун 22 колхозăн анлă хирĕсене 16 трактор бригади тухрĕ. Пĕр кун хушшинче вĕсем 500 гектар çуртри акрĕç, кĕрхи çĕртмене 600 гектар çинче культиваци турĕç, 700 гектар сӳрелерĕç, 160 гектар çурхи суха турĕç. Малтанхи кунхи ĕç итогĕсем тăрăх пĕрремĕш, иккĕмĕш, улттăмĕш, саккăрмĕш, тăххăрмĕш тата вуниккĕмĕш трактор бригадисем хастарлă ĕçлени курăнчĕ. Вăл бригадăсем кашниех 35—77-шер гектар акнă. Çурхи ĕçсене пурнăçлас çĕрте Евграфов юлташ ертсе пыракан саккăрмĕш трактор бригади малта пырать. Ку бригадăри механизаторсем «Большевик» колхозăн хирĕнче ĕçлеççĕ. Вĕсем пĕр кун хушшинче 35 гектар çуртри акрĕç, 50 гектар çинче культиваци турĕç, 150 гектар сӳрелерĕç, 80 гектар сухаларĕç.

Кун хыççăнхи кунсенче МТС-ри механизаторсем ĕç тухăçлăхне тата ӳстерчĕç.

Производство ĕçĕсене пур бригадăсенче те лайăх хак парса йышăннă.

Малтанхи кунсенчи уй-хир ĕçĕсем тракторсемпе ытти машинăсене лайăх юсанине кăтартса параççĕ. Пĕр машина та ĕçлемесĕр ларни пулман.

Трактор бригадисенче вагонсем тунă. Механизаторсем унта пушă вăхăтра çĕнĕ хаçат-журналсем вулама пултараççĕ. «Боевой листоксем» кăларассине йĕркеленĕ.

Пур трактор бригадисем те социализмла ăмăртса ĕçлеççĕ.

В. ТОНЬШЕВ.

Ялан ĕçлекен творчествăллă коллективсемшĕн

1951 сулхи декабрьпе 1952 çулхи апрель уйăхĕсем хушшинче пирĕн республикăра ялсенчи художествăллă пултарулăх коллективĕсемпе уйрăм исполнительсен смотрĕсем пулса иртрĕç. Ку смотрсенче драма, хор, музыка, хореографи коллективĕсемпе уйрăм исполнительсем хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç.

Смотрсем республикăри пур районсенче те пулса иртнĕ.

Муркашра смотра 13 коллектив тата 22 уйрăм исполнитель хутшăннă. Тивĕшри драма коллективĕ районти смотрта П. Н. Осиповăн «Айдар» пьесине пысăк мастерлăхпа лартса панă, пĕррремĕш вырăн йышăннă. Кашмашри колхоз хорĕ Г. Хирбюн Сталин çинчен хунă юррине, Сталинла премн лауреачĕн Ф. Лукинăн «Телейлĕ туслăх», В. Воробьевăн «Колхоз юрри», А. Новиковăн «В защиту мира» тата ытти юрăсене ăста юрланă. Районти смотрăн концерчĕсене виçĕ пин çын ытла пырса курнă.

Улатăр районĕнче смотра 16 художествăллă пултарулăх коллективĕ, 30 уйрăм исполнитель хутшăннă. Смотрсем юлашки вăхăтра ялсенчи художествăллă пултарулăх коллективĕсем чылай ӳссе çирĕпленнине, хăйсен репертуарне чылай лайăхлатнине кăтартса пачĕç.

Ялсенчи художествăллă пултарулăх коллективсен репертуарĕнче пĕтĕм тĕнчери прогрессивлă халăхсем миршĕн кĕрешнине, совет халăхĕ коммунизмăн аслă стройкисенче пĕтĕм вăя, пĕлĕве хурса ĕçленине, Тăван çĕршыва, Ленин — Сталин партине, мир ялавне çӳле çĕклесе пыракан çулпуçăмăра, аслă Сталина чун-чĕререн юратнине кăтартса паракан произведенисем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Драма коллективĕсен репертуарĕнче совет драматургĕсен хальхи темăпа çырнă пьесисем паллă вырăн йышăнса тăраççĕ. Коллективсем А. Корнейчукăн «Приезжайте в Звонковое», «Калиновая роща», Н. Дьяконовăн «Свальба с приданным», Г. Федоровăн «Лес звенит», Н. Айзманпа С. Павловăн «Савнă тусăм, хура куçăм», А. Калганăн «Кӳршĕсем», Г. Харлампьевăн «Пĕр колхозра», «Сурхи кĕвĕсем» пьесисене лартса пачĕç.

Елчĕк районĕнчи Свердлов ячĕпе тăракан колхоз хорĕ (руководителĕ М. Воронцов), Советски районĕнчи Турайри хор (руководителĕ П. Трофимов), Çĕрпӳ районĕнчи «1905 çул» колхоз хорĕ руководителĕ А. Андреев), Калинино районĕнчи Аçăмсырмари хор (руководителĕ З. Михайлова) коллективĕсем районти смотрсенче хăйсен творчествине пысăк мастерлăхпа кăтартса панине палăртмалла.

Канаш районĕнчи А. Мазутов колхозник районти смотрта авалхи музыка инструменчĕпе—шăпăрпа чăваш кĕввисене аван выляса пачĕ. Çавăн пекех чăваш композиторĕсен кĕввисене кĕсле çинче вăтă колхозниксем Алексеев (Канаш районĕ) тата Смирнов (Вăрнар районĕ) пысăк туйăмпа выляреç.

Смотрсене хатĕрленсе ирттернĕ тапхăрта республикăри клубсемпе вулав çурчĕсенче çĕнĕрен çĕр ытла художествăллă пултарулăх коллективĕ организациленĕ.

Ялсенчи художествăллă пултарулăх коллективĕсен смотрĕсем çитменлĕхсене те палăртрĕç. Хăшпĕр районсенчи художествăллă пултарулăх коллективĕсен ĕçĕсем начар пыраççĕ, вĕсем ĕçсыннисен культурăллă ыйтăвĕсене тивĕçтерейменççĕ. Ишлей, Октябрьски, Красноармейски районĕсенчи парти, совет, комсомол организацийĕсем художествăллă пултарулăх коллективĕсен ĕçĕпе çителĕклĕ интересленмеççĕ. Районсенчи культурăпа çутĕç пайĕсем, культура çурчĕсем ялсенчи художествăллă пултарулăх коллективĕсене пулăшса пымаççĕ, вĕсене ĕçлеме кирлĕ условисем туса памаççĕ.

Смотрсем чылай коллектив руководителĕсен пĕлĕвне ӳстерме кирлине кăтартса пачĕç.

Вырăнсенчи партипе совет тата комсомол организацийĕсен художествăллă пултарулăх коллективĕсен ĕçне куллен ертсе пымалла. Искусство учрежденийĕсен ялсенчи творчествăллă коллективсене методикăлла пулăшу парса тăмалла.

Смотрсенче тунă ӳсĕмсене çирĕплетсе, ялсенчи художествăллă пултарулăх коллективĕсен халĕ, уй-хир ĕçĕсем пынă вăхăтра, колхозниксемпе МТС работникĕсене культурăллă канма тивĕçлĕ майсем туса пама тăрăшмалла. Художествăллă пултарулăх коллективĕсен ятарласа агиткультбригадăсем организацилемелле. Ку бригадăсен, клубсемпе вулав çурчĕсенче концертсем панисĕр пуçне, уй-хирте кану вăхăтĕнче 20—30 минутлă кĕске концертсем памалла.

Чылай çĕрте çу вăхăтĕнче творчествăллă коллективсем ĕçлеме пăрахаççĕ. Çак çитменлĕхе пĕтермелле, кашни клуб çумĕнче ялан ĕçлекен творчествăллă коллектив пулма тивĕç.

Н. АМУРЦЕВ,
Чăваш АССР халăх творчестви çуртĕн директорĕ.

Колхозлă ял культури

(Редакцине килнĕ çырусем тăрăх)

Совет çĕршывĕнче колхозлă ялсем хула пекех çĕнелсе илемленеççĕ. Ялти ĕçхалăхĕ те хăйĕн пĕлĕвне кунтан-кун ӳстерсе пырать. Колхозлă яла хаçатжурнал çултан-çул нумайрах та нумайрах килсе тăрать. Колхозниксем политика, ялхуçалăх, техника, илемлĕ литература кĕнекисене юратса вулаççĕ, тĕрлĕ ыйтусемпе лекцисемпе докладсем итлеççĕ, художествăллă пултарулăх коллективĕсен ĕçне хутшăнаççĕ.

Колхозлă ял культури çинчен çырнă заметкăсемпе статьясем редакцине кунсерен нумай килсе тăраççĕ. Авторсем чылайăшĕ—ялхуçалăх ĕçченĕсем.

— Етĕрне районĕнчи Чурпай ялĕнче пуян библиотека пур. Унтан çамрăксем кăна мар, ваттисем те кĕнекесем нумай илсе вулаççĕ. 60 çултан иртнĕ Ф. Синяков колхозник чылай кĕнекесем илсе вуласа тухнă,—тесе çырать **М. Захаров** юлташ.

Ишлейри библиотека час-часах вулакансен конференцисене, литература каçĕсене ирттерет. Çак кунсенче Сталинла премн лауреачĕ Галина Николаева çырнă «Тырă вырни» роман тăрăх вулакансен конференцийĕ пулнă. Конференци пысăк активлăхпа иртнĕ. Колхозниксем ялхуçалăх ыйтăвĕсем тăрăх вулакансен конференцийĕсем ытларах ирттерме ыйтнă. Кун çинчен редакцине **И. Герасимов** ялкор çырса пĕлтерчĕ.

Красноармейски районĕнчен **И. Дмитриев** корреспондент пĕлтернĕ тăрăх, Уйкас Юнтапа ялĕнчи библиотека колхозниксем хушшинче кĕнеке пропагандине тивĕçлипе туса пырать. Çавна май вулакансен йышĕ те хăвăрт ӳсет. Халĕ библиотекăран 300 çынна яхăн кĕнекесем илсе вулаççĕ.

— Вăрмар районĕнчи Анаткас ялĕнчи вулав çурчĕ хăйĕн ĕçне лайăхлатсах пырать,—тесе çырать колхозри партбюро секретарĕн заместителĕ **Г. Никифоров** юлташ.—Колхозниксем хушшинче лекцисемпе докладсем ирттерессине лайăх йĕркеленĕ. Юлашки виçĕ уйăх хушшинче 11 лекци, 13 калаçу ирттернĕ. Лекцисем «Удобрени усси», «Тĕн тата наука», «Тĕнчери лару-тăру», «Н. В. Гоголь», «К. В. Иванов—чăваш литературин никĕсне хываканĕ» темăсем тăрăх пулнă.

Колхозсем малта пыракан совет агробиологи наукипе анлă усă курса тырпул тухăçлăхне çултан-çул ӳстерсе пыраççĕ. Ялхуçалăх ĕçченĕсем пуян та культурăллă пурăнаççĕ.

Г. Луч ялкор (Шăхасан районĕ) çапла çырать:

— Уйкас Кипек ялĕн сăн-сăпачĕ, ял çыннисен культури пĕтĕмпех çĕнелсе улшăнчĕ. Пуян пурнăçпа пурăнакан колхозниксем культура таварĕсем нумай туянаççĕ. Кашни килте тенĕ пекех çĕвĕ çĕлемелли машина, велосипед, патефон, музыка инструменчĕсем пур. Иртнĕ çул 20 колхозник çĕнĕ çуртсем туса лартрĕç.

Ĕçсыннисене коммунистла воспитани парас ĕçре лекцилĕ пропаганда паллă вырăн йышăнать. Лайăх ирттернĕ лекци итлекене пысăк усă парать, унăн пĕлĕвне, тавракурăмне ӳстерет.

— Муркашри лекторсем ĕçсыннисем валли час-часах лекцисем вуласа параççĕ,—пĕлтерет **И. Нэстин** корреспондент.—Юлашки вăхăтра «Ракетăран реактивлă самолета çитиччен», «Планетăсем çинче пурнăç пур-и?», «Этем пулса кайни», «Коммунизмăн аслă стройкисем» тата ытти темăсем тăрăх та лекцисем ирттернĕ.

Ĕçсыннисем хушшинче лекцилĕ пропагандăна лайăх йĕркелени çинчен Чкаловски, Красноармейски, Муркаш районĕсенчен **И. Краснов, Н. Гурьев, Н. Радюхин** юлташсем те çырса пĕлтереççĕ.

Колхозсенче сухи ĕçсем пыраççĕ. Лекторсен колхозниксем каннă вăхăтра тĕрлĕ ыйтусем тăрăх кĕске калаçусем ирттерессине йĕркелемелле, ял ĕçченĕсене çуракине кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа ирттерме хавхалантармалла.

Колхозлă ял культури çултан-çул ӳсет. Колхозниксем пысăкрах та анлăрах ыйтусемпе интересленеççĕ. Совет çынни пурне те пĕлесшĕн, вăл тĕрлĕ ыйтусемпе паллашать. Октябрь революцийĕ хыççăн ирĕке тухнă ĕçхалăхĕн пурнăçĕ паллалла мар улшăнчĕ, культури ӳсрĕ. Çакăншăн ĕçсыннисем партипе правительствăна, аслă çулпуçа Сталин юлташа чĕререн тав тăваççĕ.

Шкулти стена хаçачĕ

Хĕрлĕ Чутайри вăтам шкулти библиотека çумĕнче тăваттăмĕш çул «Çамрăк вулавçă» ятлă стена хаçачĕ тухса тăрать.

Хаçатра «Кĕнекесене хисеплетпĕр» ятлă пай пур. Унта çамрăк вулавçăсен статьисене яланах вулама пулать. Улттăмĕш «Д» класра вĕренекен Давид Ильин Леонид Агаков çырнă «Ылтăн вăчăра» ятлă кĕнекене вуласа тухнă хыççăн çапла çырать: «Леонид Агаков çырнă «Ылтăн вăчăра» ятлă кĕнеке мана питĕ килĕшрĕ. Çак кĕнекере писатель совет ачисен хастарлăхĕпе патриотизмне кăтартса панă. «Ылтăн вăчăра» кĕнеке мана кĕнекери герой Ванюшка пекех Тăван çĕршыва юратма вĕрентрĕ».

Çакăн хыççăн «Ылтăн вăчăра» ятлă кĕнеке илсе вулакансен йышĕ ӳсрĕ. Нумай классенче ву кĕнекене пĕрле вуласа сӳтсе явреç.

Стена хаçачĕ пуçарнипе хăшпĕр кĕнекесем тăрăх вулакансен конференцийĕсене ирттереççĕ. Сăмахран, çиччĕмĕш «С» класра Е. Ильина çырнă «Четвертая высота», тăваттăмĕш «С» класра—А. Гайдар çырнă «Тимур и его команда» ятлă кĕнекесем тăрăх вулакансен конференцийĕсене ирттерчĕç.

Н. ЕГОРОВ.

Кирпĕч ытларах туса кăларма пулчĕç

КАНАШ. Кирпĕч завочĕн коллективĕ Майăн 1-мĕшне хавхаланса уявларĕ. Завод сезона лайăх хатĕрленнĕ. Çак кунсенче кашни рабочи производство планне срокчен тултарассишĕн, пахă продукци туса кăларассишĕн тăрăшса ĕçлет. Сезон пуçланнă кунсенчех рабочисем пахă тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Кирпĕч касакан К. Игнатьева, пресс çине тăм яракан А. Бельцова, чĕрĕ кирпĕч турттаракан Е. Владимирова работницăсем ĕç нормине ăнăçлă тултарса пыраççĕ.

Карьерта ĕçлекенсем те вĕсенчен юлмаççĕ. Вĕсем вагонеткăсене вăхăтра тăм тиесе, ĕç хăвăртлăхне ӳстерме пулăшаççĕ. Уйрăмах Кузнецов машинист тăрăшса ĕçленине палăртас пулать. Вăл двигательле пĕр тикĕс ĕçлеттерессишĕн, топливо перекетлессишĕн кĕрешет. Завод коллективĕ кирпĕч тумалли плана срокчен тултарма, продукци пахалăхне лайăхлатма пулчĕ.

А. СОКОЛОВА.
И. КУЗЬМИН.

Студентсен хорĕ

Кăвак чаршав икĕ еннелле ерипен уçăлчĕ. Куç умне хор коллективĕ тухса тăчĕ.

— Концерт пуçлатпăр, программăра совет композиторĕсем çырнă юрăсем,— пĕлтерчĕ концертмейстер.

Шупашкарта Чăваш педагогика институтĕнчи студентсен хорне пĕлмен çын çук пулĕ. Ăна çамрăк композитор А. Галкин ертсе пырать. Хор час-часах хулари клубсемпе театрсенче, студентсен каçĕсенче концертсем парать.

Иртнĕ суйлав вăхăтĕнче çамрăк суйлавçăсем валли хор пилĕк концерт, унсăр пуçне тăватă суйлав участокĕнче ятарласа хатĕрленĕ программăпа концертсем панă. 1951 çулта республикăра пулса иртнĕ художествăллă пултарулăх коллективĕсен смотрĕнче хор иккĕмĕш вырăн йышăннă.

Хор репертуарĕнче—совет композиторĕсен çĕнĕ произведенийĕсем, чăваш халăх юррисемпе халăх демократи çĕршывĕсенчи халăхсен юррисем.

Хор уйрăммăнах «Гимн студентов», «Марш советской молодежи», «Как у Волги у реки», «Салам, Мускав!» юрăсене аван юрлать.

И. СЕРГЕЕВ.

Хушма хуçалăхра

Чапаевски поселокри хушма хуçалăх республикăри чи лайăх хушма хуçалăхсенчен пĕри шутланать. Унăн заведующийĕ пулса вунă çул ĕнтĕ Дмитрий Андреевич Андреев юлташ ĕçлет.

Хушма хуçалăхра çичĕ теплица ĕçлет, кăçал тата тепĕр теплица туса пĕтерне. Парниксенчи рамăсен шучĕ 2.500 çитет. Теплицăсенче пахча-çимĕçсем ӳстерес тĕлĕшпе сăнавлă ĕçсем нумай тăваççĕ. Андреев юлташ малта пыракан совет агробиологи наукине тăрăшса вĕренсе хăйĕн ĕçĕнче пысăк ӳсĕмсем тăвать.

Хушма хуçалăх кăçал хулари ĕçсыннисене 9 тонна ытла симĕс сухан сутнă. Халĕ тата 1,5 тонна сутмалăх пур.

Пĕр теплицăра хăяр, помидор ӳстереççĕ. Унта пахчари пекех. Шултăра симĕс хăярсем ӳсеççĕ. Малтанхи хут мартăн 21-мĕшĕнче хăяр татса пуçтарнă. Помидорсем чăмăртаннă. Ку теплица хĕлĕпех ĕçленĕ. Хĕвел вырăнне электричество çутипе усă курнă.

Парниксенче 16 пин тĕп ытла купăста, 65 пин тĕп помидор, нумай пин тĕп редиска ӳсет.

Пĕр теплицăра кăнтăрти ӳсентăрансем: роза, олеандр, туя, кактус ӳсеççĕ.

Пахча-çимĕçсене шăварса тăрас ĕçе механизациленĕ.

Хушма хуçалăха тата аслăлатма шутлаççĕ. Çитес çул кунта 10 теплица ĕçлемелле.

— Пахча-çимĕç ӳстерес ĕçри опытпа ытти хушма хуçалăх руководителĕсене паллаштарма тăрăшатăп. Вĕренччĕр, халиччен курман пахча-çимĕçсем çитĕнтерччĕр,—тет Андреев юлташ.

А. ЖИРНОВ.

Çĕнĕ кĕнекесем

Чăваш АССР государство издательствинче çакăн пек кĕнекесем пичетленсе тухнă:

Чăвашла:

С. ЭЛЬГЕР.—**Ешĕл хумăн.** Сăр вăрманĕ çинчен çырнă очерк.

Кĕнекере 56 стр., тиражĕ 5.000 экз., хакĕ 70 пус.

БОРИС ЖИТКОВ.—**Эпĕ мурса сӳрени.** М. Тимофеева куçарнă. Шкул çулне çитмен ачасем валли. Кĕнекери шалти ӳкерчĕксене Ф. Осиповпа П. Сизов ӳкернĕ.

Кĕнекере 212 стр., тиражĕ 5.000 экз., хакĕ 6 тенкĕ.

Э. Э. ПЕНИОНЖЕВИЧПА К. В. ЗЕЛЕНСКАЯ—**Хурсене ĕрчетесси тата пăхса усрасси.** Вырăсларан куçарнă.

Кĕнекере 68 стр., тиражĕ 2.000 экз., хакĕ 85 пус.

ЧĂВАШ АССР ÇУТĔÇ МИНИСТЕРСТВИ.—**Вăтам шкулсен программи. Чăваш литературин. VIII—X классем валли.**

Кĕнекере 56 стр., тиражĕ 1.000 экз., хакĕ 1 тенкĕ.

Вырăсла:

И. Н. АНТИПОВ-КАРАТАЕВ и С. И. АНДРЕЕВ.—**Углубление и окультуривание пахотного слоя почв Чувашской АССР.**

Кĕнекере 36 стр., тиражĕ 3.000 экз., хакĕ 50 пус.

БОЛЬШЕВИКСЕН ИСТОРИЛЛĔ КОНФЕРЕНЦИЙĔ

(Партин Апрельти конференцийĕ пулнăранпа 35 çул çитнĕ май)

1917 çулхи апрелĕн 24-мĕшĕпе 29-мĕшĕ (майăн 7—12-мĕшĕ) хушшинче РСДРП(б)-ăн Петроградра пулса иртнĕ çиччĕмĕш (Апрельти) конференцийĕ—большевиксен пĕррремĕш хут уççăн пухăннă конференцийĕ пулнă. Парти историйĕнче вăл хăйĕн пĕлтерĕшĕпе парти съезчĕ пекех пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Конференци питех те çивĕч историллĕ лару-тăрура пулса иртнĕ. Çĕршывра икĕ власть пулнă: Вăхăтлăх правительствăпа пĕр вăхăтрах Советсем пуçланса кайнă. Советсем ĕçсыннисен анлă массисем çине таянса тăнă. Вăхăтлăх правительство меньшевиксемпе эсерсен соглашательле партийĕсем пулăшнипе кăна власра тытăнса тăнă. Вĕсем ун чухне Советсенче ытларахăш пайĕ пулнă. Вăхăтлăх правительство помещиксемпе капиталистсен интересĕсене хӳтĕлесе, мир, çăкăр, çĕр паман, халăх требованисене пурнăçламан, пурнăçлама та пултарайман. Хăйĕн политикине пула çĕршыва юхăнупа выçлăх хăрушлăхĕ умне çитерсе тăратнă правительствăна ĕçсыннисем шанса тăрасси хăвăрт чакса пынă.

Пирĕн Тăван çĕршывăн малашлăхне татса панă вăхăтра, большевиксен партийĕ рабочи класпа пĕтĕм халăха кризисран хăтăлмалли çула кăтартса панă. Çав çул вăл власть рабочисен, салтаксен тата хресченсен депутачĕсен аллине куçассинче, икĕ власлăха пĕтерессинче пулнă.

Советсен влаçĕ кăна ĕçсыннисене çăкăр, хресченсене çĕр, халăхсене мир пама пултарнă, Советсен влаçĕ кăна çĕршыва юхăнуран илсе тухма пултарнă, тенĕ В. И. Ленин.

Çак задачăсене пурнăçа кĕртмелли çул-йĕре Апрельти конференци палăртса панă.

* * *

Апрельти конференци вăрçăпа революцин пур тĕп ыйтăвĕсене те сӳтсе явнă: хальхи вăхăт çинчен, вăрçă çинчен, Вăхăтлăх правительство çинчен, Советсем çинчен, аграрлă ыйту çинчен, наци ыйтăвĕ çинчен т. ыт. те. Çак пур ыйтусем тăрăх та конференци, пĕр кăмăллă пулса, Ленинпа Сталин хыççăн кайнă.

Конференцире тĕп вырăнта революцине малалла аталантарса пырас майсем çинчен лартнă ыйту пулнă. Хальхи вăхăт çинчен тунă докладра В. И. Ленин хăйĕн Апрельти тезисĕсенче палăртнă питех те паллă положенине, партин революцин пĕррремĕш этапĕнчен—«власа буржуази аллине панăскерĕнчен... унăн иккĕмĕш этапне куçса пымалла, çак этап власа пролетариатпа хресченсен чи чухăн сийĕсен аллине памалла», тесе кăтартса панине пурнăçа кĕртме кирли çинчен калакан положенине малалла аталантарнă. Партин социализмлă революцине туса ирттерме хатĕрленме тытăнмалла пулнă.

Партин чи малтанхи задачи вырăнне В. И. Ленин «Пĕтĕм власть Советсене!»—лозунг кăларса тăратнă.

Апрельти тезиссенчех Владимир Ильич Советсен республикине туса хурас идея кăларса тăратнă. Парламентлă республика мар, «пĕтĕм çĕршывĕпех, аялтан пуçласа çӳле çитиех, рабочисен, батраксен тата хресченсен депутачĕсен Совечĕсен республики пулмалла»,—тесе палăртнă Ленин. 1917 çулхи мартăн 18-мĕшĕнче «Вырăс революцийĕ çĕнтересси условийĕсем çинчен» ятлă статьяра Сталин юлташ халăхăн революциллĕ кĕрешĕвĕн пĕтĕм Российăри органне туса хума кирли çинчен, çав орган кирлĕ вăхăтра революциллĕ власăн органĕ пулса тăма çителĕклĕ авторитетлă пулма тивĕçли çинчен çырнă. «Рабочисен, салтаксен тата хресченсен депутачĕсен Пĕтĕм Российăри Совечĕ кăна çавăн пек орган пулма пултарать» (И. В. Сталин. Соч., 3 т., 13 стр.).

Революцин кирлĕ задачисенчен пĕри—империализм вăрçинчен тухас задача пулнă. Ăна власть Советсен аллине куçмасăр татса пама май килмен. «Вăрçă вĕçлентĕр тесен,—тенĕ В. И. Ленин,—власа революциллĕ класăн аллине памалла». (В. И. Ленин. Соч., 24 т., 207 стр.).

Эпир халĕ,—тесе кăтартса панă Владимир Ильич,—империализмпа хĕçпăшаллă халăх хушшинчи вăрçă патне пыратпăр. Революциллĕ шухăш-кăмăллă çынсен класлă инстинкчĕ вĕсене империализмпа кĕрешмелли çула—пĕр-пĕрипе вăрçакан çарсен салтакĕсем хушшинче килĕшӳ тумалли çула кăтартса панă, анчах ку кăна çителĕксĕр пулнă. Вăрçа пĕтермелли çул çинчи тĕп чăрмавсенчен пĕри массăсен политикăллă опыт çукки пулнă. Вăл оборонăллă шухăш-кăмăлсенче, массăсем Вăхăтлăх правительствăна нимĕн ăнланмасăр ĕненсе тăнинче палăрнă. Вăхăтлăх правительство революци çĕнтерĕвĕсене хӳтĕлессишĕн мар, империализмла буржуазин тĕллевĕсене пурнăçлассишĕн вăрçа тăсса пынă. Буржуази халăха çапла улталаса тăнипе, ăна меньшевиксемпе эсерсем пулăшса тăнине тăрă шыв çине кăлармалла пулнă.

«Пĕтĕм власть Советсене!» лозунг кăларса тăратса, парти Советсенче пролетари линийĕ пуçпулса тăрассишĕн кĕрешме кирли çинчен асăрхаттарнă. Большевиксен çине тăрса тăрăшнипе «пролетари линине вак буржуаллă линирен уйăрмалла, интернациональлă линине оборонăллă линирен, революциллĕ линине оппортунистла линирен уйăрса, рабочисене организацилесе тата хĕçпăшаллантарса, вĕсен вăйне революцин çитес этапне хатĕрленĕ çĕре ямалла»,—тенĕ Апрельти конференцин решенийĕнче.

«Пĕтĕм власть Советсене!» лозунг, хăйĕн аталанăвĕн пĕррремĕш тапхăрĕнче (апрелĕн пуçласа июльти демонстраци çитиччен) меньшевиксемпе эсерсен блокĕ кадетсемпе çыхăну тытма пăрахнине тата Советсен меньшевиксемпе эсерсенчен тăракан правительствине туса хунине пĕлтернĕ, мĕншĕн тесен вĕсем вăл вăхăтра Советсенче ытларахăш пайĕ пулнă. Лозунг çавăн пекех большевиксем ирĕклĕ агитаци тума право илессине, Советсенче партисен ирĕклĕ кĕрешĕвĕ пулассине пĕлтернĕ. Большевиксем Советсенчи ытларахăш пайне çĕнтерсе илессишĕн кĕрешнĕ тата Совет правительствин составне революци мирлĕ майпа аталанса пынă никĕс çинче улăштарма шутланă. Ку план, тет Сталин юлташ, пролетариат диктатури пулнине пĕлтермен, анчах ăна пурнăçлама условисем туса хатĕрлеме пулăшнă, мĕншĕн тесен меньшевиксемпе эсерсем власа илес пулсан, вĕсен вара революцине хирĕçле платформа туса хумалла пулатчĕ, ку вара вĕсене тăрă шыв çине кăларатчĕ, вĕсене ĕçсыннисенчен уйăрассине хăвăртлатнă пулĕччĕ.

Партин питĕ пысăк задачисенчен пĕри—Вăхăтлăх правительство помещиксемпе буржуази правительстви пулса тăни çинчен, вăл империализмлă вăрçă вăрçма чарăнмасси çинчен калакан чăнлăха массăсене ăнлантарса парасси пулнă. Большевиксен партийĕн лозунгĕсем тĕрĕссине, унăн политики тĕрĕссине массăсен хăйсен опычĕ тăрăх пĕлсе ĕненмелле пулнă.

Большевиксен лозунгĕсем рабочисемпе салтаксен лозунгĕсем пулса тăни Милюков ноти пирки пулса иртнĕ апрельти демонстрацинчен те уççăн курăнать. Милюков нотинче патша правительстви союзниксене империализмла вăрçă «мĕн çĕнтеричченех» тăсма панă обязательствине Вăхăтлăх правительство пурнăçлама хатĕрри çинчен каланă.

Помещиксемпе буржуази правительствине пулăшса тăракан меньшевиксемпе эсерсен соглашательле политикин хăрушă енне халăхăн анлă массисене ăнлантарса памалла пулнă. 1917 çулхи майăн 2(15)-мĕшĕнче, апрельти демонстраци пула правительство кризисĕ туса тăнă вăхăтра, меньшевиксемпе эсерсем, помещиксемпе буржуазин власне çăлса хăварас шутпа коалициллĕ Вăхăтлăх правительство составне кĕнĕ. Министр портфелĕсене вĕсем кадетсемпе пайласа илнĕ. Çапла вара меньшевиксем, 1905 çулта социал-демократсене Вăхăтлăх революциллĕ правительство ĕçне хутшăнтарма кирлĕ марри çинчен кăшкăрашакансем, хăйсем Вăхăтлăх контрреволюциллĕ правительство составне кĕнĕ.

В. И. Ленинпа И. В. Сталин çакна уйрăмах палăртнă: социализмлă революцине хатĕрленĕ тапхăрта соглашательле, оппортунистла партисем уйрăмах пысăк хăрушлăх пулса тăраççĕ. Ку партисем контрреволюциллĕ буржуази енне куçаççĕ, массăсене ултавлă сăмахсемпе хăйсем хыççăн илсе кайма, вĕсене империализм вăрçипе контрреволюци айне чикме хăтланаççĕ.

Оппортунистсем Российăри революцине, çавăн пекех пĕтĕм тĕнчери рабочисен юхăмне пысăк сиен кӳнĕ. Оппортунистсен партийĕсене, кайран меньшевиксемпе эсерсен контрреволюциллĕ партийĕсем пулса тăнăскерсене, тăрă шыв çине кăларса, Ленинпа большевиксем çавăн пекех оппортунистсемпе сыхăнма пăрахассишĕн пĕтĕм тĕнчери аренăра та кĕрешнĕ. Ленин Циммервальдри пĕрлешӳрен сирĕппĕн те татăклăн уйрăлма кирли çинчен кăтартса панă. Çав пĕрлешӳ, пацифистла пропаганда туса пырса, усă оппортунистсемпе—буржуаллă оборонецсемпе çыхăну тытма пăрахман. Ленин çĕнĕ, Коммунистла Интернационал организацилессишĕн çине тăнă.

Пирĕн çĕршывшăн килсе тухнă çакăн пек çивĕч те питĕ ответлă самантра конференцире Ленина хирĕç Каменев тата Рыков тухса каланă. Вĕсем те, меньшевиксем пекех. Росси социализмлă революци валли ӳссе çитмен, Российăра буржуаллă республика çеç пулма пултарать, тесе сӳпĕлтетнĕ. Вĕсем партине, меньшевиксем пекех, Вăхăтлăх правительствăна «контроль туниех» чарăнса тăма сĕннĕ.

Конференци Каменевпа Рыковăн тата Зиновьевăн капитулянтла требованийĕсене (вĕсем. Ленин хирĕç тăнине пăхмасăрах, Циммервальдри пĕрлешӳре юлмалла, тенĕ) шăлса ывăтнă. В. И. Ленин панă сĕнӳсене—парти директивĕ вырăнне йышăнса çирĕплетнĕ.

Большевиксен партийĕн оппортунистсен партийĕсемпе тата хăйсем хушшинчи капитулянтсемпе килĕшме пултарайман кĕрешĕвĕ социализмлă революци çĕнтересси чи кирлĕ условийĕсенчен пĕри пулнă. Большевиксен партийĕн опытне халăх демократи çĕршывĕсенчи коммунистсен тата рабочи партийĕсем творчествăллă йышăннă. Çĕршыва социализмла çĕнетсе улăштарассишĕн кĕрешсе, вĕсем хăйсем хушшине сăрхăнса кĕрекен оппортунистла элементсене—рабочи класс хушшинчи буржуази агентурине тăрă шыв çине кăларса пыраççĕ.

Ленинпа Сталин буржуаллă-демократиллĕ революци социализмлă революцине куçни çинчен вĕрентни тата большевиксен партийĕ ăна пурнăçа кĕртессишĕн ĕçлени халăхсене капитализм чуралăхĕнчен, империализм вăрçин тискерлĕхĕнчен хăтăлмалли çула кăтартса парать, социализм патне пымалли çула çутатса тăрать.

* * *

Социализмлă революци çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешӳ пынă тапхăрта хресченсен ыйтăвĕпе наци ыйтăвĕ уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Вĕсем пролетари революцийĕпе пролетариат диктатурин пĕтĕмĕшле ыйтăвĕн пайĕ пулса тăнă.

Хулапа ялти пур ĕçлĕ халăх власшăн пыракан кĕрешӳре кам майлă пулассине—буржуази е пролетариат енче пулассине—çак ыйту революци кун-çулĕн ĕмĕçлăхне татса парать. Францире 1848 тата 1871 çулсенче пулнă революцисем, тĕпрен илсен, шăпах çавăнпа пĕтнĕ, тесе вĕрентет Сталин юлташ, мĕншĕн тесен çав революцисенче хресченсен резервĕсем буржуази енче тăрса юлнă.

Буржуаллă-демократиллĕ революци вăхăтĕнче пролетариат пуç пулса тăрассишĕн кĕрешекен большевиксен партийĕ буржуаллă-демократиллĕ революци социализмлă революцине куçса пынă тапхăрта хресченсен резервĕсене çĕнсе илессишĕн тата хастарлăрах кĕрешнĕ.

Конференци аграрлă тата наци ыйтăвĕсем тăрăх решенисем йышăннă, патша самани пусмăрласа тăнă хресченсем еннĕне тата Российăри халăхсем еннĕпе (вĕсене пусмăрласа пурăнас политикăна Вăхăтлăх правительство малалла тăсса пынă) парти хăйĕн линине палăртнă.

В. И. Ленин аграрлă ыйту çинчен тунă доклад тăрăх конференци помещиксен çĕрĕсене конфискацилесси, вăл çĕрсене хресченсен революциллĕ комитечĕсен аллине парасси çинчен тата çĕршывра мĕнпур çĕрсене национализацилесси çинчен решени йышăннă.

Парти хресченсене çĕршĕн кĕрешме, вăл кĕрешĕве Учредительлă пуху пухăниччен кĕтмесĕр туса пыма чĕннĕ; парти хресченсене организациллĕ майпа кĕрешме чĕнсе каланă, хресченсен революциллĕ комитечĕсене тăвас задачăна кăларса тăратнă.

Паллă ĕнтĕ, Вăхăтлăх правительствăпа кĕрекен меньшевиксемпе эсерсем çĕр ыйтăвне татса парассине Учредительлă пуху пухăниччен, Учредительлă пухăва пухассине вара—вăрçă пĕтиччен тăсса пынă. Пур майсемпе те, хăш чухне хĕçпăшаллă вăйпа та усă курнă, вĕсем помещиксен çĕрĕсене хресченсем туртса илессине чăрмантарма хăтланнă.

Апрельти конференцин решенийĕсем, большевиксен мĕнпур ĕçĕсем пекех, хресченсене большевиксен партийĕ вĕсемшĕн чăн-пĕр революциллĕ парти пулнине, помещиксене сирпĕтме тата çĕр илме хресченсене сăмахпа мар, ĕçпе пулăшнине кăтартса панă.

Нумай нациллĕ Российăри рабочисемпе хресченсене большевиксен партийĕ тавра пĕтĕçтерес ĕçре Сталин юлташăн докладĕ тата Апрельти конференцин наци ыйтăвĕ тăрăх йышăннă решенийĕсем пысăк вырăн йышăннă. Ленинпа Сталин империализм вăрçи пуçланиччен наци ыйтăвĕ енĕпе парти политикин никĕсĕсене туса хатĕрленĕ. Аслă çулпуçсем рабочи класăн революциллĕ партийĕн пусмăрта пурăнакан халăхсен империализма хирĕç нациллĕ ирĕклĕхшĕн пыракан юхăмне пулăшса пымалла, тенĕ. Большевиксен партийĕ нацисен самоопределени правишĕн тăнă—нацисене уйрăм государствăсем туса хурасси таранах ирĕк панă. Çак положенисем Сталин юлташăн докладĕнче питĕ уççăн палăрнă.

Большевиксен партийĕн наци ыйтăвĕнчи тĕп ыйтусем, тенĕ Сталин юлташ, çаксем пулса тăраççĕ:

а) халăхсем ирĕккĕн уйрăлма пултарнă правăна йышăнни;

б) государствăра юлакан халăхсем валли—областьри автономи;

в) вак халăхсем валли—вĕсене ирĕккĕн аталанма шанăç паракан уйрăм законсем;

г) государствăри мĕнпур нацисен пролетарийĕсем валли—пĕрлĕхлĕ, уйрăлми пролетариллĕ коллектив, пĕрлĕхлĕ партн» (И. В. Сталин. Соч., 3 т., 55 стр.).

Сталин юлташ нацисен уйрăлас прави çинчен тăракан ыйтуне ку е вăл наци ку е вăл самантра уйрăлни кирлипе кирлĕ марри çинчен тăракан ыйтупа пăтраштарас яма юраманнине палăртнă. Пролетариатăн çав самантри конкретлă обстановкăпа килĕштерсе тата социализмлă революцишĕн пыракан кĕрешĕвĕн интересĕсене кура татса памалла.

Пролетариат партийĕн, кăтартса панă Сталин юлташ, вăл социализмлă революцине тума çул тытать пулсан, империализма хирĕç пыракан кирек мĕнле революциллĕ юхăма та пулăшса тăмалла. Çапла туса вăл Хĕвеланăçпа Хĕвелтухăç хушшинче кĕпер хывать, социализмлă революцин авангарчĕ валли шанчăклă тыл туса парать, империализмăн аякри тылне аркатать, колонисемпе пăхăнса тăракан çĕршывсенчи ĕçсыннисен массисенчен пролетариатăн империализма хирĕç, социализмлă революцишĕн пыракан кĕрешĕвĕнче унăн союзникĕсене туса хурать.

Ленинпа Сталина хирĕç, нацисен самоопределени правине хирĕç Пятаковпа Бухарин кĕрешнĕ, вĕсем вăрçă çулĕсенчех наци ыйтăвĕнче национал-шовинистла позици çинче тăнă. Вĕсем тĕрлĕ нациллĕ рабочисемпе хресченсен вăйне салатма, çапла вара социализмлă революци ĕçне пĕтерсе лартма шухăшланă.

Конференци Пятаковпа Бухаринăн сĕмсĕр шухăшĕсене сирсе ывăтнă, парти политикин наци ыйтăвĕнчи Ленинпа Сталинăн принципĕсене çирĕплетнĕ.

Конференци решенийĕсене пурнăçласа, большевиксен партийĕ шанчăклăн, çирĕп те пурне те курса тăрса, массăсене помещиксемпе капиталистсен власне сирпĕтсе антарма ертсе пынă.

Ленинла-сталинла линине пĕр пăрăнмасăр тытса пырса буржуаллă-демократиллĕ революцине социализмлă революцине куçарассишĕн кĕрешни—1917 çулхи октябрьте пролетариллĕ революци тума, тĕнчере пĕррремĕш социализмлă государство туса хума май пачĕ.

В. МОРОЗОВ.

Халăх демократи çĕршывĕсенче

Румыни халăхĕ çĕршывăн нацилле никама пăхăнманлăхне пĕлтернĕренпе 75 çул тултарнине уявлама хатĕрленет

БУХАРЕСТ, майăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Румыни халăхĕ майăн 9-мĕшне — Совет çарĕсем фашистла Германие çĕнтернĕ куна тата вырăс çарĕсем Турци çарне çĕнтерни пула Румыние никама пăхăнман государство туса хуни çинчен пĕлтернĕренпе 75 çул тултарнине паллă тума хатĕрленет.

Çав чаплă куна уявланă ятпа предприятисенче, учрежденисенче тата шкулсенче «Румынин нацилле никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешес ĕçре вырăс халăхĕ питĕ пысăк пулăшу пани çинчен», «Совет Çарĕ Румынине фашистла пусмăрлăхран хăтарни çинчен», «Америкăпа Англи империалисчĕсем—Румыни государствин никама пăхăнманлăхĕн ĕмĕртенхи тăшманĕ пулни çинчен» докладсемпе калаçусем ирттерессĕ.

Халăха вĕрентес ĕçĕн министерствипе Ĕç çамрăкĕсен союзĕн Центральнăй Комитечĕ вăтам тата тулли мар вăтам шкулсенче «Вырăс халăхĕпе Румыни халăхĕ хушшинчи ĕмĕртенхи туслăх», «Румыни халăхĕн хăйĕн нацилле никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешес ĕçри паттăрлăхĕ» темăсемпе литература конкурсĕ организациленĕ.

«Карте руса» издательствинче вырăс халăхĕпе Румыни халăхĕ Турци захватчикĕсене хирĕç кĕрешни çинчен çырнă монографисене, документсен, сборникĕсене тата Румыни писателĕсен уйрăм произведенийĕсене пичетлесе кăларма хатĕрленессĕ.

Румынири ĕççыннисен ĕçри ăмăртăвĕ

БУХАРЕСТ, майăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Румынири промышленность предприятийĕсен коллективĕсем Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе ăмăртса ĕçленĕ вăхăтра тунă çитĕнÿсене çирĕплетсе пыраççĕ тата ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тăваççĕ. Браила хулинчи машинăсем тăвакан «Прогрессул» заводри рабочисем çĕнĕ йышши питĕ кăткăс продукци туса кăларма вĕренсе çитнĕ. Заводра малтанхи экскаваторсене, грейдерсене, бульдозерсене, скреперсене туса хатĕрленĕ. Вĕсене Дунай юханшывĕпе Хура тинĕс хушшинчи канала тунă çĕре янă.

Бухарестри «Гривица Роше» текен чугун çул мастерскойĕсенче ĕçлекен рабочисем пурте производстври заданисене кашни кунах тултарса пыраççĕ тата ирттерсе тултараççĕ.

Хунедоар хулинчи Г. Георгиу-Деж ячĕпе тăракан металлурги комбинатĕнчи пĕррĕмĕшпе иккĕмĕш мартен кăмакисем патĕнче ĕçлекен хурçă шăратакансем Совет Союзĕнчи стахановец Матулиниц меслечĕпе ĕçлеме вĕренсе çитнĕ. Вĕсем металла хăвăрт шăратса кăларнипе апрель уйăхĕнче тата май уйăхĕн малтанхи кунĕсенче государствăна валли 100 пин лей яхăн укçа перекетленĕ. Çамрăк доменщиксен тăваттăмĕш бригади май уявĕ ячĕпе пынă ăмăртура стахановла бригада ятне илнĕ. Халĕ çав бригада кашни кун сменăри заданисене икĕ хут тултарса пырать.

Венгрири ĕççыннисен пурнăçĕ лайăхланса пырать

БУДАПЕШТ, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Венгри Халăх Республикин халăх хуçалăхĕ ăнăçлă малалла аталанса пырать, çакă вара ĕççыннисен пурнăçне ытларах та ытларах лайăхлатма май парать. Кăçал халăх промышленноçĕ апат-çимĕç таварĕсене чылай нумайрах туса кăлара пуçланă. Çапла, кăçалхи пĕррĕмĕш кварталта вăккăн суту-илÿ тăвакан магазинсемпе лавккасем рис пĕлтĕр çав тапхăрта сутнинчен 23,5 процент ытларах, апат-пушмак—пĕр хут çурă ытларах, радиоприемниксем 87,6 процент ытларах сутнă. Кăçал çу, аш-какай тата ытти апат-çимĕçсем те чылай нумай туянать.

Халăха ытти лайăхрах тивĕçтерме хуласемпе рабочи поселоксенче çĕнĕ магазинсем нумай уçаççĕ. Республика столицинче кăна кăçал государствăн 618 магазинне уçма палăртнă.

БУДАПЕШТ, майăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Çĕршывăн чылай предприятисенче Май уявĕ умĕнхи социализмла ăмăртăван малтанхи итогĕсене тунă. Çĕр кăмрăк промышленноçĕ апрельти плана ирттерсе тултарнă. Май уявĕ умĕнхи стахановла вахтăра тăнă кун—апрелĕн 30-мĕшĕнче çĕршывăн шахтерсем пĕр кунхи заданине пĕрре çурă хут ытларах пурнăçланă.

Малта пыракан рабочисен нумайăшĕ хăйсен пиллĕкçуллăх планĕсене майăн 1-мĕшĕ тĕлне тултарнă.

Албанири хаçат-журналсемпе радио

ТИРАНА, майăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Халăх влаçĕ пулнăранпа Албанире хаçат-журналсем кăларас тата радио ĕçне сарас тĕлĕшпе пысăк ĕç тунă. Халĕ çĕршывра 41 хаçат-журнал, 1938 çулхинчен икĕ хут нумайрах тухса тăрать. Хаçат-журналсен уйăхри тиражĕ, 1938 çулхипе танлаштарсан, ултă хута яхăн ÿснĕ.

Хаçатсемпе кĕнекесене халăхăн анлă массисем вулаççĕ. Çичĕ çул хушшинче кĕнекесен тиражĕ 7,5 миллион экземпляра çитнĕ. Вĕсем хушшинче марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсем тĕп вырăнта тăраççĕ. Вырăссен классикĕсен тата совет писателĕсен произведенийĕсене нумай пичетлесе кăлараççĕ.

Халăх демократи строй условийĕсенче радио ĕçĕ анлă саралнă. Нумай пулмасть Тирана хулинчи çĕнĕ радиостанци ĕçлеме тытăннă, вăл унчченхи радиостанцирен 50 хут хăвататрах. Халĕ çĕршывра çичĕ радиостанци ĕçлет. Албани ирĕке тухиччен çĕршывра пĕр радиостанци кăна пулнă.

Болгари халăх республикин пичечĕ

СОФИЯ, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарире тухса тăракан хаçат-журналсен шучĕ нумайланса, вĕсен тиражĕ ÿсе пырать.

Хальхи вăхăтра çĕршыв центрĕнче тата вырăнсенче пĕтĕмпе 74 хаçат тухса тăрать, вĕсен пĕтĕм тиражĕ—1.600.000 экземпляр. Болгарири коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн органĕн—«Работническо дело» хаçатăн тиражĕ çеç халĕ çĕршывра 1944 çулхи сентябрĕн 9-мĕшĕччен кашни кун тухса тăнă мĕнпур хаçатсен тиражĕнчен пысăкрах. Кунсăр пусне, Болгарире 62 журнал тухса тăрать. Вĕсем — партиллĕ-политикăллă журналсем, наука, литературăпа искусство ыйтăвĕсене тата ытти ыйтусене çутататакан журналсем. Вĕсен пĕтĕм тиражĕ 400.000 экземпляртан иртет.

1950 çулта Болгарире фабрикăсемпе заводсенче тухакан нумай экземплярлă хаçатсем темиçе кăна пулнă. Халĕ çавăн пек хаçатсем 100 ытла. Вырăнти пичет хăвăрт тĕрекленсе пырать, унăн авторитечĕпе влиянийĕ ÿсет.

Чехословаки çыннисем вырăс чĕлхине вĕренеççĕ

ПРАГА, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословакири ĕççыннисем вырăс чĕлхине юратса вĕренеççĕ. Республикăра виççĕмĕш çул ĕнтĕ халăха вырăс чĕлхине вĕрентмелли курссем нумай ĕçлеççĕ. Вĕсене Чехословакипе Совет Союзĕн туслăх союзĕн вырăнти организацийĕсем уçнă. Çĕршыври предприятисенче вырăс чĕлхине вĕренмелли 7 пин курс ĕçлет. Пльзень хулинчи В. И. Ленин ячĕпе тăракан машинăсем тăвакан заводра кăна çавăн пек 30 курс ĕçлет.

«Руде право» хаçатра паян пичетленнĕ официальнăй сведенисем тăрăх, халĕ Чехословакире халăха вырăс чĕлхине вĕрентмелли 18.042 курс шутланать, вĕсенче 280.103 çын вĕренет.

Вьетнамри ăмăртса ĕçлекен хресченсен конференцийĕ

ШАНХАЙ, майăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Вьетнам информаци агентстви пĕлтернĕ тăрăх, апрель уйăхĕнче Çурçĕр Вьетнамра хресченсен конференцийĕ пулнă. Конференцие ăмăртса ĕçлекен хресченсем пухăннă. Конференцие пухăннисем иртнĕ çулта ялхуçалăхĕнче тунă ĕçсем çинчен тата тырпул тухăçлăхне ÿстерсе пырас тата пурлăхпа перекетлĕн усă курас енĕпе малашне мĕнле ĕçсем тумалли çинчен сÿтсе явнă.

Конференцире Çурçĕр Вьетнамри тата Вăтаçĕр Вьетнамри тĕрлĕ районсенчен 44 делегат тата Вьетнам республикин ертсе пырас ĕçри деятелĕсем пулнă.

Конференци уçăлнă чухне Вьетнамри ĕçлĕх партин (Лао-донг текен партин) представителĕ Хо Вьет Танг сăмах каланă.

Ялхуçалăх министрĕн заместителĕ Зиам Буан конференцие пухăннисем умĕнче тырпул нумайрах туса илес тата пурлăха перекетлес енĕпе тăракан задачăсем çинчен, çав задачăсене пурнăçлани ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатма тата Вьетнам Халăх çарĕн ыйтăвĕсене тивĕçтерме май парасси çинчен каланă.

Конференци делегачĕсем ăмăртса ĕçлекен хресченсем рис тухăçлăхне, 1950 çулхипе танлаштарсан, 20—30 процент ÿстернине палăртнă. Çак çитĕнÿсене рационализаторла сĕнÿсене нумай пурнăçласа пынине тата уй-хирте çĕнĕ меслетсемпе ĕçленине пула тума пултарнă.

Конференци хупăннă кун, унта пухăннисем ăмăртса ĕçлессине массăллă юхăм туса яма, Хо Ши Мин, президент, Вьетнамри ĕçлĕх партийĕ (Лао-донг), Вьетнамри наци пĕрлешÿллĕ фрончĕ (Льен-Вьет), Вьетнам халăх правительстви тăшмана хăвăртрах çĕнтерсе пĕтĕм тĕнчери мире сыхласа хăварас тĕлĕшпе тивĕçлĕ ĕç тума производствăна ÿстерес тата пурлăха перекетлес пирки туса хатĕрленĕ плана пурнăçлассишĕн кĕрешмелли массăллă ăмăртăва анлă сарма сăмах панă.

Конференцие пухăннисем пĕтĕм çĕршыври ăмăртура малта пыракансен конференцине кайма делегатсем суйланă.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНАЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, майăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсемпе пĕрле пур фронтсенче те Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç оборонăра тăрса çапăçнă, вĕсен салтакĕсемпе офицерĕсене тата техникине чылай пĕтернĕ.

Ĕнер фронтăн уйрăм участокĕсенче тăшман темиçе хутчен те разведка тăвас тĕллевпе тапăнма хăтланнă, анчах вăл тапăннисем ăнăçсăр пулнă. Тăшмана каялла хăваласа янă, ăна сиен кÿнĕ.

Халăх çарĕн зенитнăй артиллери чаçĕсем фронтра тата тылра тăшманăн 4 истребительне персе ÿкернĕ.

Миршĕн, демократишĕн кĕрешес шухăш-кăмăлпа

СИДНЕЙ, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Сидней хулинче ĕççыннисен демонстрацийĕ пулнă. Демонстраци миршĕн, демократишĕн тата пурнăç условийĕсене лайăхлатассишĕн кĕрешме чĕнекен лозунгсемпе пулса иртнĕ. Демонстрантсем çĕклесе пыракан транспарантсемпе лозунгсем пилĕк аслă держава хушшинче мире сыхламалли килĕшÿ тума, тĕнчери çĕршывсем хушшинчи суту-илĕве вăйлатма чĕннĕ, Корейăра питĕ тискер ĕçсем тăвакан Америка империалисчĕсене намăслантарса питленĕ. Демонстрацине тухнисем атомлă хĕçпăшалпа бактериллĕ хĕçпăшала чарса лартма ыйтнă.

Демонстраци пĕтнĕ хыççăн ĕççыннисен митингĕ пулнă. Унта 30 пин çын пухăннă. Митингра Великобританири коммунистсен партийĕн исполкомĕн председателĕ Галлахер, Австралири коммунистсен партийĕн центральнăй комитечĕн председателĕ Диксон тата ыттисем те сăмах тухса каланă. Митинга пухăннисем Америка империалисчĕсен тискер ĕçĕсене—Корейăпа Китайра бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курнине сивлекен, Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕ çав преступленисене йĕрлесе тĕпчемелле тутăр тесе, Австрали правительствинчен мерăсем йышăнма ыйтакан резолюцине пĕр шухăшлă пулса йышăннă.

ЛИВАНРИ СВЯЗИСТСЕМПЕ ЖЕЛЕЗНОДОРОЖНИКСЕН ЗАБАСТОВКИ

БЕЙРУТ, майăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Бейрутри телефон станцийĕнчи служащисем ĕç укçи ÿстерме ыйтса забастовка пуçланă.

Забастовка тăвакансем вырăнне ĕçлеме влаçсем çарти связистсен ушкăнне янă. Анчах забастовка тăвакансем çар служащийĕсене телефон аппарачĕсем патне яман. Полици забастовка тăвакансене телефон станцийĕн çуртĕнчен вăйпа кăларса яма тăрăшнă. Çавăн чухне тытăçусем пулса иртнĕ. Забастовка тăвакан çынсенчен хăшпĕрисем аманнă.

Паян забастовка малалла пырать. Почта, телеграф тата информаци министерстви халех ĕçе тытăнман служащисене ĕçрен кăларса ярассипе хăратать.

Майăн 2-мĕшĕнче Дамаскпа Хомс хушшинчи чугун çул çинче, Эн-Накуртан Триполине каякан чугун çул çинчи железнодорожниксем забастовка тума тытăннă. Забастовка тăвакансем вăхăтра ĕç укçи тÿлеме (железнодорожниксем темиçе уйăх хушши ĕнтĕ ĕç укçи илеймеççĕ) тата апат-çимĕçпе япаласем хакланнă пирки хушса памалли укçана тÿлеме ыйтаççĕ.

ХĔВЕЛАНĂÇ БЕРЛИНРА ХАЛĂХ МИЛИТАРИЗМЛА «ПĔТĔМĔШЛЕ ДОГОВОРА» ХИРĔÇ ПРОТЕСТЛЕТ

БЕРЛИН, майăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви çакăн çинчен пĕлтерет: Бонри президент Хейс ĕнер «политикăллă аслă шкул уçнă. Çавăн чухне Хĕвеланăç Берлинра пуçтарăнакан нумай çынсем, пуринчен ытларах студентсем, милитаризмла «пĕтĕмĕшле договора» хирĕç хăйсем хытă протестлени çинчен пĕлтернĕ. Çĕнĕрен уçакан шкул çуртĕ Америка оккупацилесе тăракан секторта. Демонстрантсем çав çурт умне пухăннă. Вĕсем Хейс пынă чухне «Милитаризмла «пĕтĕмĕшле договор» тĕп пултăр!», тесе кăшкăрнă. Полицейскисем демонстрантсене тапăннă, 100 çын ытла тытса хупнă.

ПАКИСТАНРА ТУЛĂПА ÇĂНĂХ ХАКĔСЕМ ÿСНЕ

КАРАЧИ, майăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). «Пакистан таймс» хаçат Хĕвеланăç Пенджабри провинцире тулăпа çăнăх хакĕсем сасартăк хытă ÿссе кайни çинчен пĕлтерет. Çапла, Равалпинди хулинче «юлашки тăватă кун хушшинче кăна пасарсенче тулă хакĕ икĕ хут ÿснĕ», тесе çырать хаçат. Çавна пула халăха карточкăсем тăрăх паракан çăнăх хакĕ те вăтам шутпа 20 процент ÿснĕ. Абботтабад тата Шекупур хулисенче тулă вăтам шутпа 30 процент таран хакланнă. Тулăпа çăнăх хакĕсем татах та ытларах ÿссе пыраççĕ.

Американецсем Иранăн шалти ĕçне хутшăнаççĕ

ТЕГЕРАН, майăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Тегеранри хаçатсем çакăн çинчен çыраççĕ: Америкăн Иранри посолĕ Гендерсон Иранăн тулашри политикин пур пысăк ыйтăвĕсем тăрăх та Иран правительствине çапла хĕсет.

Гендерсон посол Мосаддык премьер-министрпа майăн 3-мĕшĕнче тĕл пулса калаçни çинчен пĕлтерсе, «Бахтаре эмруз» хаçат çапла çырать: Иран правительствине çывăх тăракан çынсем пĕлтернĕ тăрăх, Гендерсон тĕлпулура Мосаддыка Англипе Америка дипломачĕсем хăйсем хушшинче Иран нефть промышленноçне национализациленипе тата кун пирки Англи Тĕнчери çĕршывсен Гаагăри судĕнче ĕç хускатнипе çыхăнса тăракан ыйтусене мĕнле сÿтсе явни çинчен «пĕлтернĕ».

Кунсăр пусне, Гендерсон, Иранăн тулашри политика çинчен, хĕвеланăçĕнчи державăсем тĕлĕшпе, сăмахран, Бахрейн утравĕсем пирки Иран протестлесе нота панă май Иранпа Англи хушшинче пулса тăнă лару-тăру çинчен Мосаддыкпа «калаçнă».

Англин Иранри политикăллă ĕçри çыннисем пĕлтернĕ тесе, «Бахтаре эмруз» хаçат çакна палăртать: Гендерсон юлашки ыйтупа калаçнă чухне Бахрейн утравĕсем тата Перси заливĕнчи ытти утравсем пирки Иран нотăсем яни «Америкăн çав районта нефть промыслисен хуçисем пулса тăракан çыннисене пăшăрхантарни» çинчен каланă. Çавăнпа та Гендерсон Иранăн хальхи вăхăтра «Бахрейн утравĕсем тĕлĕшпе хăйĕн прависене çине тăрсах хÿтĕлеме кирлĕ мар» тесе Мосаддыка «канаш панă».

Бахрейн утравĕсем тĕлĕшпе Иранăн уйрăмах хытă тăрăшмалла мар, мĕншĕн тесен «Бахрейн утравĕсем çинче Америкăн çар базисем пур», тесе Гендерсон çине тăрса калани çинчен «Атеш» хаçат пĕлтерет.

ГААГА, майăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). «Де ваархейд» американецсем Иранра çĕнĕрен вăрттăн усал ĕçсем тума хăтланни çинчен пĕлтерет. Хаçат çапла çырать: «Тегеранран килнĕ хыпарсем тăрăх, американецсем шах çывăхĕнчи çынсемпе усă курса нефть пирки пыракан калаçусенче ăнăçусем тума тăрăшаççĕ. США-н Тегеранри посолĕ Гендерсон шахпа çывăх тăракан çынсене Мосаддык правительствипе хирĕçтерме хăтланать. Çак кунсенче Гендерсон шах çумĕнче ĕçлекен министрпа Хосейн Алапа калаçни çинчен пĕлтереççĕ. Посол çапла каланă: Мосаддык политикине хирĕç, нефть ыйтăвĕ пирки американецсен сĕнĕвĕсем тĕлĕшпе тытса пыракан политикăна хирĕç тухма вăхăт çитрĕ ĕнтĕ, тенĕ. Гендерсон шах çумĕнче ĕçлекен министра США-н государство департаменчĕ туса хатĕрленĕ планпа паллаштарнă. Ку плансене Иран шахĕ пĕлет. Америка сĕнĕвĕсем, пĕтĕмĕшпе илсен, çакăн пек: 1. Иран правительстви хăйĕн нефть промыслисенче ĕçлеме тата нефть продукчĕсем туса кăларакан предприятисенче ĕçлеме Америка специалисчĕсене хутшăнтарать. 2. Иран правительстви нефте Америка суднисемпе турттарасси çинчен тунă договор çине алă пусать. 3. США правительстви вара Иранри нефть промышленноçĕ валли кирлĕ оборудованине тăрататать. Гендерсон çакăн пек «илĕртÿллĕ» сĕнÿсемпе Иранри нефть промышленноçне Пĕрлешÿллĕ Штатсене пăхăнса тăмалла тăвасшăн пулнине тавçăрса илме йывăр мар ĕнтĕ».

Вашингтон хушнипе

Грецице Турци хушшинче çар ĕçĕ енĕпе пыракан калаçусем

АФИНЫ, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Афины хулине Турци правительствин Мендерес премьер-министр ертсе пыракан делегацийĕ пынă. Çак делегаципе Афинăри влаçсен канашлăвĕ çинчен официальнăй пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă.

Пĕлтерÿре çапла каланă: калаçусем вăхăтĕнче икĕ çĕршыв интересленекен пур ыйтусене те, тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсене пурне те сÿтсе явнă. Икĕ çĕршывăн политикăллă руководителĕсем пур ĕçсем енĕпе те пĕр-пĕринпе тата тачăрах çыхăнса ĕçлеме килĕшнĕ.

Калаçусем пирки «Махи» хаçат çапла çырать: пур ыйтусем тăрăх та тĕплĕн калаçса татăлнă тесе каланинчен чăннипе çавăнта Атлантика союзĕнче тăракансем хушнă тăрăх çар ĕçĕсем пирки канашлани пытарса тăма хăтланни палăрса тăрать. Икĕ çĕршыв представителĕсен заявленийĕнчен çакă курăнать: вĕсем вăрçа хатĕрленнĕ май туса тăракан йывăрлăхсене, икĕ çĕршывăн тухса тăракан пысăк йывăрлăхсене тÿссе ирттерме килĕшнĕ. Вĕсен заявленийĕнче вĕçкĕнленсе калани те пур, çакă вара икĕ пĕчĕк çĕршыва пачах та килĕшмест. Грецице Турци пулас вăрçăран нимĕнле усă та илес çук, вĕсем хăйсен мĕн пуррине пĕтĕмпех сухатма пултараççĕ, тет хаçат.

Италире американецсем хушнипе коммуниста ĕçрен кăларнă

РИМ, майăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). «Унита» тата «Аванти» хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Флоренцири оптика аппаратури тăвакан «Галилео» текен чи пысăк заводра технически директор пулса ĕçлекен Джанфранко Муско коммуниста ĕçрен кăларнă. Ăна «Хăрушсăрлăха пĕрлешсе хÿтĕлемелли управлени текен миссин руководителĕ Дейтон американец приказ панă тăрăх ĕçрен кăларса янă. Дейтон американец Итали промышленноçĕн ĕçĕсене сĕмсĕррĕн хутшăннине хирĕç протестленĕ ятпа паян заводри рабочисемпе служащисем—пĕтĕмпе 3 пин çын—24 сехетлĕх забастовка пуçланă.

«Унита» хаçат Муско инженера ĕçрен кăларса янине американецсем тата Америка хушнине туса тăракансем çынсене политикăллă ĕçсемшĕн хĕсĕрлени тесе хак парать.

БОЛИВИРЕ САРТ-ТУ ПРОМЫШЛЕННОÇНЕ НАЦИОНАЛИЗАЦИЛЕССИШĔН КĔРЕШЕКЕНСЕН ЮХĂМĔ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Ла-Пас хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, «сулахайри революциллĕ парти», Хосе Антонио Арсе ертсе пыраканскер, Боливири рабочисене чĕнсе манифест пичетлесе кăларнă. Çав манифестра рудниксене халех пĕр тÿлевсĕр национализацилеме тата çĕр реформине ирттерме ыйтнă. Манифестра çапла каланă: парти нацилле интересĕсене палăртса тăракан мĕнпур требованисене, çав шутра тулашри пĕтĕм суту-илĕве правительство тĕрĕслесе тăмалли йĕрке туса хума ыйтнине те хÿтĕлет.

Ытти пĕлтерÿсенчен Боливири влаçра тăракан ушкăнсем коммунистсене хирĕçле шăв-шав кăларса халăх требованийĕсене путлантарса лартма тăрăшни палăрать.

Фашистла деголлевецсен провокацийĕ

ПАРИЖ, майăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). «Юманите» тата «Либерасьон» хаçатсем çакăн çинчен пĕлтернĕ: ĕнер фашистла деголлевецсен ушкăнĕ—40 çынна яхăн—ученăйсен обществин залне (Париж) пырса кĕнĕ. Залра запасри республиканец-офицерсен федерацийĕн съезчĕ пынă. Фашистла хулигансем зала чукмарсемпе пырса кĕнĕ, унта пĕтĕмпех аркатса тăкнă, лозунгсене çурнă, Франци республикин государство ялавне çурса тăкнă, съездри темиçе çынна, çав шутра федераци председательне Пети генерала амантнă. Съезда пухăннă çынсем вĕсене хирĕç хытă тăнă, де Голль бандичĕсене залран хăваласа кăларнă. Кун хыççăн съезд хăйĕн ĕçĕсене малалла туса пынă.

Çамрăксен театрĕн смотрĕ

Майăн 4-мĕшĕнче Пионерсен çуртĕнче республикăри çамрăксен театрĕ РСФСР-ти çамрăксен театрĕн смотрне хутшăнма хатĕрленĕ чи лайăх постановкăсене кăтартма пуçларĕ. Малтанхи кун Маторинпа Рысс çырнă «Суворовцы» пьесăна лартса пачĕç. Пьесăна хулари шкулсенче вĕренекенсем питĕ нумаййăн пырса курчĕç. Вĕсем театр коллективĕ лайăх спектакль хатĕрленине хапăл туса йышăнчĕç.

Иккĕмĕш кунне С. Михалковăн «Красный галстук» пьесине кăтартрĕç. Пионерсен пурнăçне кăтартакан пьеса куракансене питех те килĕшрĕ.

Ĕнер театр Рысс çырнă «Девочка ищет отца» пьесăна лартса пачĕ.

Майăн 9-мĕшĕччен театр Гераскинăн «Аттестат зрелости», Е. Шварцăн «Снежная королева», Розовăн «Ее друзья» пьесăсене кăтартать.

Майăн 10-мĕшĕнче çамрăк куракансен конференцийĕ пулать. Унта çамрăксем театр артисчĕсемпе тĕл пулаççĕ, кăтартнă постановкăсене сÿтсе яваççĕ.

Пĕлтерни

Паян, майăн 7-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн парткабинетĕнче çакăн пек ĕçсем пулаççĕ:

1. А. М. Гусев юлташ докладчиксемпе агитаторсем валли «Майăн 9-мĕшĕ—совет халăхĕ Германи фашизмне çĕнтернине палăртмалли кун» темăпа доклад туса парать.

2. ВКП(б) историне кĕске курс тăрăх тата марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсем тăрăх пĕррĕмĕшпе иккĕмĕш çул вĕренекен кружоксен руководителĕсен семинарĕсем пулаççĕ.

Семинарсене П. М. Михайлов тата А. И. Воробьев юлташсем ирттереççĕ.

ВКП(б) ХУЛА КОМИТЕЧĔН ПАРТКАБИНЕЧĔ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

СССР халăх хуçалăхне юсаса малалла аталантармалли тăваттăмĕш государственнăй заем

5-мĕш выляра выляв укçи тухнине кăтартакан

СПРАВКА-ТАБЛИЦА

Выляв 1952 çулхи апрелĕн 27-мĕшĕнче Луцк хулинче пулса иртнĕ.

Таблицăра 100 тенкĕлĕх облигаци çине миçе тенкĕ выляв укçи тухнине кăтартнă. Выляв укçи шутне облигаци хакĕ те кĕрет.

Заемăн мĕнпур 242 разрядĕнчи çак серисемпе облигацисен номерĕсем выляса илнĕ:

Сери №№	Облигаци №№	Миçе тенкĕ	Сери №№	Облигаци №№	Миçе тенкĕ
060123	1—50	200	069635	1—50	500
060595	18*)	1.000	069849	36*)	1.000
060630	21*)	1.000	069892	46*)	1.000
060753	47*)	1.000	069976	49*)	25.000
060810	17*)	1.000	070088	31*)	1.000
060862	39*)	1.000	070197	25*)	1.000
060992	1—50	200	070254	1—50	200
061120	26*)	25.000	070692	08*)	5.000
061341	26*)	1.000	070732	18*)	1.000
061352	1—50	200	070917	41*)	1.000
061378	36*)	1.000	070923	43*)	5.000
061751	09*)	1.000	071077	1—50	500
061914	34*)	1.000	071094	41*)	1.000
062141	27*)	5.000	071137	1—50	200
062156	10*)	1.000	071159	13*)	1.000
062202	41*)	1.000	071290	15*)	1.000
062277	06*)	5.000	071344	1—50	200
062354	01*)	1.000	071373	06*)	10.000
062449	35*)	1.000	071727	1—50	200
062514	1—50	200	072251	16*)	1.000
062574	35*)	1.000	072260	03*)	1.000
062658	29*)	1.000	072335	35*)	1.000
062683	34*)	1.000	072351	33*)	1.000
062939	1—50	200	072499	23*)	1.000
063019	26*)	1.000	072812	48*)	1.000
063078	45*)	1.000	073135	1—50	200
063085	06*)	1.000	073199	29*)	1.000
063278	39*)	1.000	073212	23*)	1.000
063282	50*)	1.000	073293	1—50	500
063290	17*)	1.000	073300	1—50	200
063312	01*)	5.000	073335	05*)	1.000
063521	20*)	1.000	073392	1—50	200
063632	1—50	200	073555	1—50	500
063768	29*)	1.000	073622	1—50	500
063860	29*)	5.000	073923	26*)	1.000
063896	11*)	1.000	074086	1—50	200
063994	1—50	500	074150	1—50	200
064041	30*)	1.000	074180	20*)	50.000
064106	09*)	1.000	074607	1—50	200
064113	1—50	500	074632	35*)	1.000
064448	40*)	1.000	074696	1—50	200
064541	1—50	200	074983	16*)	5.000
064647	1—50	200	075362	32*)	1.000
064654	12*)	1.000	075398	1—50	500
064701	35*)	1.000	075447	1—50	500
064772	30*)	5.000	075561	1—50	200
064845	01*)	1.000	075622	1—50	500
065009	1—50	500	075708	1—50	200
065134	05*)	1.000	075730	31*)	1.000
065290	26*)	1.000	075746	1—50	200
065330	07*)	1.000	075999	44*)	1.000
065795	02*)	10.000	076066	13*)	1.000
065826	11*)	1.000	076138	08*)	1.000
066026	49*)	1.000	076271	1—50	200
066074	27*)	1.000	076330	1—50	500
066158	41*)	1.000	076347	39*)	1.000
066375	15*)	1.000	076442	1—50	200
066485	13*)	1.000	076535	03*)	1.000
066550	17*)	1.000	076696	30*)	1.000
066655	30*)	1.000	076909	04*)	1.000
066659	1—50	200	077238	22*)	1.000
066713	30*)	1.000	077712	1—50	200
066801	10*)	1.000	077875	1—50	500
066837	15*)	1.000	077985	1—50	200
067019	07*)	1.000	078129	26*)	1.000
067156	1—50	500	078200	1—50	200
067446	24*)	5.000	078364	1—50	500
067474	21*)	1.000	078443	24*)	1.000
067503	43*)	1.000	078508	06*)	1.000
067504	08*)	1.000	078561	1—50	200
067610	20*)	1.000	078578	07*)	1.000
067726	38*)	1.000	078584	01*)	1.000
067800	40*)	5.000	078784	1—50	500
067872	42*)	1.000	078830	14*)	1.000
067895	1—50	500	078863	42*)	10.000
067913	23*)	10.000	078877	1—50	500
068091	21*)	1.000	078934	1—50	200
068514	1—25	200	079125	10*)	1.000
068592	06*)	1.000	079207	1—50	500
068848	29*)	1.000	079247	24*)	10.000
068919	1—50	500	079417	1—50	200
069096	25*)	1.000	079631	46*)	1.000
069181	1—50	200	079806	47*)	1.000
069293	29*)	1.000	079954	11*)	1.000
069392	19*)	1.000	079957	06*)	1.000
069438	45*)	1.000	079963	1—50	200
069578	1—50	200			

*) Çак серие кĕрекен облигацисен ытти 49 номерĕ 200-шер тенкĕ выляса илнĕ.

ЧĂВАШ АССР ПЕРЕКЕТ КАССИСЕН УПРАВЛЕНИЙĔ.

РЕСПУБЛИКАРИ ВЫРĂС ДРАМА ТЕАТРĔНЧЕ

Паян, майăн 7-мĕшĕнче, юлашки хут

„ТРИ СЕСТРЫ"

Ыран, майăн 8-мĕшĕнче,

„МОЛОДОЙ ЧЕЛОВЕК"

Майăн 9-мĕшĕнче,

„СЕМЬЯ"

Спектакльсем каçхине 8 сехет те 30 минутра пуçланаççĕ.

„РОДИНА" КИНОТЕАТРА

Паян, майăн 7-мĕшĕнче, пур сеанссенче те Чехословакире ÿкернĕ çĕнĕ илемлĕ фильм

„Дикая Бара"

Сеанссем 12, 14, 16, 18.15, 20 тата 22 сехетре пуçланаççĕ.

Граждансем!

Хăвăрăн автомашинăсене, мотоциклсене, моторлă кимĕсене Госстрахра страховани тума пултаратăр.

Авари пулнă пирки е кĕтмен инкеке пула транспорт хатĕрĕ пĕтсен е пăсăлсан, вара Госстрах укçа тÿлет.

Договор тума Госстрах инспекцийе пырăр е агента чĕнĕр.

ГОССТРАХĂН ЧĂВАШ АССР-ĕнчи УПРАВЛЕНИЙĔ.

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ялхуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—3-61, культура пайĕ—3-61, совет строительстви пайĕ—3-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01328 Типографи № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.